24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮНЬ
15
ВЫРСАРНИКУН
139 (5854) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, кĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПЕЛТЕРЎ

1941 çулти июнĕн 13—14-мĕшĕсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн черетлĕ VII пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум çакăн пек ыйтусем сӳтсе-явса тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ:

1. Партин Чăваш облаçĕнчи организацийĕнчи парторгăнсен суйлавĕсен итогĕсем çинчен.

2. Партин Улатăр районĕнчи организацийĕ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен.

3. Çураки итогĕсем çинчен, 1941 çулти тырпула пухса кĕрес ĕçе организацилес задачăсем тата ялхуçалăх продукчĕсен заготовкисем çинчен.

4. Организацияллĕ ыйтусем.

Пленум ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕне Д. Т. Пароятников юлташа бюро членĕсен составне кĕртрĕ.

Вĕренме кайнă пирки В. Н. Вишнев, Е. Г. Григорьев, А. М. Иванов, В. М. Шиверов юлташсене пленум членĕсен составĕнчен тата Н. Д. Албутовпа К. С. Степанов юлташсене пленум членĕсен кандидачĕсен составĕнчен кăларасси çинчен ВКП(б) Обкомĕн VI пленумĕ йышăннă решенине пленум пăрахăçа кăларчĕ.

ВКП(б) ОБКОМĔ.

Утă пухса кĕме хатĕр тăмалла

Нумаях пулмасть, СССР Совнаркомĕ «Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем çинчен» постановлени йышăнчĕ. Енер эпир çак ыйтупа Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă постановлението хамăр хăçатра пичетлесе кăлартăмăр. Çак пысăк вырăн йышăнса тăракан решенисем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатма конкретлă майсем кăтартса параççĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлăн малалла яма пулăшаççĕ.

«Çарансем тата кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен тухăçлăхне ӳстерес шутпа,—тенĕ СССР Совнаркомĕ йышăннă постановленире, — колхозсене çарансемпе кĕтӳ çӳретмелли вырăнсене лайăхлатас тĕлĕшпе вĕтлĕхсене, тумхахсене тасатса тăма, шывсене кохтарса яма, çӳп-çапсемпе чулсене тасатса тăма, орошени тума, çарансене органикăллă тата вырăнти ытти удобренисемпе апат парса тăма хушас.

Çарансем тата кĕтӳ çӳретмелли вырăнсем тĕлĕшпе пулнă обезличкăна пĕтерес шутпа, колхозсене çарансемпе кĕтӳ çӳретмелли мĕнпур вырăнсене уйăх бригадисем е звеносем çумне çирĕплетсе пама, çарансемпе кĕтӳ çӳретмелли вырăнсене лайăхлатас тата вĕсене пăхса тăрас тĕлĕшпе туса ирттермелли мĕнпур ĕçсене вĕсем çине хума хушас».

Çапла ĕнтĕ, правительство колхозсем умне çирĕп те конкретлă задача лартать. Çарансемпе кĕтӳ кĕтмелли вырăнсене тухăçлă та культурăллă участоксем туса хумалла, вăл ĕçе уйăм бригадăсем е звеносем туса пымалла,—çакăн пек ĕнтĕ çарансем тĕлĕшпе çывăх вăхăтра тумалли питех те кирлĕ ĕç.

Ку çеç те мар-ха. Правительство, унсăр пуçне, çакăн пек кăтарту панĕ: утă çулма палăртнă лаптăксем çинче çуркунне кĕтӳ çӳретме юрамасть, колхозсенчи кĕтӳ çӳретмелли вырăнсенче тата акса хăварнă вырăнсенче выльăхсене илсе тухса тăрантарассине организацилемелле. Çак ĕçе те пирĕн нумай колхозсем йĕркелесе яман-ха. Уйрăмăнах клевер, вика тата ытти акса тăвакан утă хуçалăхĕ пирĕн колхозсенче питех те çителĕксĕр ӳссе пырать, мĕншĕн тесен çак ĕçе хакламан юлташсем халичченех нумай тĕл пулаççĕ. Ун пек юлташсем пуринчен ытла Пăрачкав, Первомайски, Куславкка районĕсенче чылай пулмалла. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕр çул ӳсекен курăксем акас плана июнĕн 10-мĕш тĕлне Пăрачкав районĕ 20,3 процент, Первомайски—33,8 процент тата Куславкка районĕ 36,5 процент кăна тултарнă. Тӳрех калас пулать, çак районсенче акмасăр ӳсекен тата утă тума акса хăварнă культурăсене пăхса усрас ĕç те çителĕксĕр пулса пырать.

Çурхи кунсем иртеççĕ. Çуллахи шăрăх кунсем пуçланаççĕ. Утăпăн кĕреш ĕçĕн хĕрӳллĕ вăхăчĕсем сывхарса килеççĕ. Çарансенче тĕрлĕ хупаксенчен, пиçенсенчен, çӳп-çапсенчен, тункатасенчен, чулсенчен тасатас тĕлĕшпе ĕçлеме колхозниксене мобилизацилемелле; çарансене тĕрлĕ удобренисемпе апат памалла; утăна çулса кĕме хатĕрлемелле: утă çулнă çĕрте кам тата мĕнле ĕçлесси халех палăр пулмалла, утă çулмалли машинăсене тата ытти ĕç хатĕрĕсене хатĕрлесе хумалла; государствăна утă тăратассине организованно иртерме хатĕр тăмалла.

Утă пухса кĕме хатĕрленĕ май, СССР Совнаркомĕн çак кăтартăвне çирĕплĕн асра тытас пулать:

«Утă пахалăхне ӳстерес шутпа, СССР Наркомземне, республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене утăна кĕске срокра çулса пĕтермелле тума, утă пуçтарса кĕрессине (утăна капăна хывассине шутласа) тĕштырăсене пуçтарса кĕртес умĕн вĕçлемелле, курăксем акнă вырăнсенче утăна çулма тытăннă хыççăн 5—10 кун хушшинче пуçтарса кĕртмелле тума хушас».

Утăна кĕске срокра пухса кĕрсе, унăн пахалăхне ӳстермелле!—акă мĕне пирĕн уйрăмăнах асра тытас пулать.

Утă çулса кĕресси—ялхуçалăх çулĕнчи ответлă тапхăрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Пирĕн республикăн кăçал çарансенчи ахмасăр ӳсекен курăксене 57 пин гектар çинчен, иртнĕ çулсенче акса хăварнă нумай çул ӳсекен курăксене 52 пин гектар çинчен, кăçал акнă пĕр çул ӳсекен курăксене 18100 гектар çинчен çулса кĕмелле. Кунсăр пуçне тата кăçал акса хăварнă нумай çул ӳсекен курăксене пĕрремĕш хут çулса илмелле. Пĕтĕмпĕне илсен, утă çулмалли лаптăкăн пысăккăшĕ 130 пин гектартан та иртет.

Курăнать ĕнтĕ, умра пысăк ĕç тăрать. Çак пысăк ĕçе тунă чухне **тăкаксене хирĕç кĕрешесси** пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăмалла. Тăкаксем сахалтарах пулччăр тесен, утă çулас ĕçе иртерех тытăнмалла. Утă çулма кая юлса тытăннă чухне яланах тăкаксем пысăк пулаççĕ, утă пахалăхĕ те начар пулать. Çарана унти курăксем пучаха ларнă вăхăтра (чечеке ларас умĕн) çулмалла, клевера—чечеке ларма пуçланă вăхăтра, викăна—курăк çинче икĕ-виçĕ пучах ӳсме тытăннă вăхăтра çулмалла. **Утăна иртерех çулмалла, хăвăрт типĕтмелле,**—çакăн пек тусан кăна лайăх пахалăхлă тата тухăçлă утă туса илме пулать. Анчах яка çулма кирлине те манма юрамасть. Утă çулнă хыççăн унăн хăмăлĕ вăрăм пулни—эпир çухату нумай тунине кăтартса парать. Çавăнпа та ăна 4—5 сантиметр çӳлĕш кăна хăварас пулать. Анчах иккĕмĕш хут çулнă чухне вăрăмрах хăвармалла, мĕншĕн тесен вăрăмрах хăварнă утă хăмăлĕ хĕлле юр тытса юлма пулăшать тата курăксене сивĕсем çитиччен çирĕплесе çитме май парать. Çаксене шута илсе, утă пухса кĕнĕ чухне агротехника кăтартăвĕсене те тивĕçлипе пăхăнса ĕçлес пулать.

Пирĕн колхозсенче выльăхсен шучĕ çулран çул ӳсех пырать. Çав выльăхсене ĕрчетес ĕçре утă пысăк вырăн йышăнса тăрать. Правительство заданийĕ тăрăх, пирĕн колхозсенчи фермăсенче выльăхсем валли шултра апатсем, утăпа шутласан: кашни лаша пуçне çулталăкра 34 центнер, кашни ĕне пуçне 24 центнер, кашни çурăх пуçне 4 центнер пухса хатĕрлемелле. Кунсăр пуçне тата страховой фондсем тумалла. Çакăнтан ĕнтĕ утă пухса кĕрес ĕçĕн пахалăхĕ лайăх пулмалли уçăн курăнса тăрать.

Колхозлă ялхуçалăхĕнчи работниксен задачи çакăнта пулать: СССР Совнаркомĕ выльăх апатне ӳстермелли мерăсем çинчен йышăннă постановленине колхозниксем хушшинче анлăн ăнлантарса памалла, утăна кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕме хатĕрленес ĕçе организацилемелле, çапла вара государствăна памаллăх та, колхоз фермисенчи выльăхсене тăрантармалăх та, ĕçхунĕсем тăрăх памаллăх та, страховой фонд тумалăх та утă-улăм çителĕклĕ пухса кĕрессишĕн кĕрешмелле.

1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин ылттăн тата кĕмĕль медалĕсем

ЛЕНИНГРАД, июнĕн 13-мĕш. (ТАСС). СССР Наркомфинĕн монетнăй дворĕ 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин заказне срокчен пурнăçа кĕртнĕ. Выставка участникĕсене наградăлама пысăк тата пĕчĕк ылттăн медальсем 1.500 медаль, кĕмĕл медальсем 7 пин медаль туса хатĕрленĕ.

Çĕнĕ заемран вырăнти бюджетсене уйăрса паракан средствăсем

Перекет кассисен главнăй Управленийĕ перекет кассисене пурне те Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемĕ тăрăх пухăннă средствăсенчен вырăнти бюджета каякан отчисленисене пĕр тытса тăмасăр уйăрса пама хушнă.

СССР Верховный Совечĕн VIII Сессийĕ йышăннă закон тăрăх çав отчисленисене çакăн чухлĕ уйăрса памалла: рабочисем, служащисем тата хулари ытти халăх хушшинче вырнаçтарнă заем сумминчен — союзлă республикăсен бюджечĕсене 25 процент, çак суммăран 15 процентне вырăнти бюджетсене памалла. Колхозниксемпе единоличниксем хушшинче вырнаçтарнă заем суммине 1941 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнче 146.000 тенкĕ, Вăрмар районĕнче — 136.000 тенкĕ, Чкаловски районĕнче 119.100 тенкĕ, Шăмăршă районĕнче — 97.900 тенкĕ пухнă. Кая юлса пыракан районсем: Тăвай, Октябрьски, Куваккино. Ку районсенче подписка уçăмне 6—12 пин тенкĕ кăна пухнă.

ВИССĔМĔШ ПЯТИЛЕТКА (ТĂВАТТĂМĔШ ÇУЛХИ КĂЛАРĂМ) ЗАЕМĔ

Çĕнĕ заемăн чаплă çĕнтерĕвĕ

(Чăваш АССР государство перекет кассисен тата Госкредит Управленийĕн даннăйĕсем тăрăх)

Июнĕн 14-мĕш тĕлне Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема 24.712.000 тенкĕлĕх сарнă. Вăл иртнĕ çулти подпискăран 3.796.000 тенкĕ ытларах пулать. Рабочисемпе служащисем 18.191.000 тенкĕлĕх, ялсенчи ĕççыннисем 6.521.000 тенкĕлĕх çырăннă.

Чăваш АССР столицинчи — Шупашкар хулинчи ĕççыннисем государствăна кивçен 3.769.000 тенкĕ пачĕç. Çĕнĕ заема рабочисемпе служащисем хушшинче вырнаçтарса тухас ĕçе Улатăр тата Çĕмĕрле хулисем, Элĕк, Куславкка, Первомайски тата Сĕнтĕр районĕсем, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче вырнаçтарса тухас ĕçе Улатăр, Куславкка тата Куваккино районĕсем вĕçлесе çитереймен.

Подписка уçăмне колхозниксемпе единоличниксем 1.464.000 тенкĕ тӳленĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнче подписка уçăмне июнĕн 14-мĕш тĕлне 146.000 тенкĕ, Вăрмар районĕнче — 136.000 тенкĕ, Чкаловски районĕнче 119.100 тенкĕ, Шăмăршă районĕнче — 97.900 тенкĕ пухнă. Кая юлса пыракан районсем: Тăвай, Октябрьски, Куваккино. Ку районсенче подписка уçăмне 6—12 пин тенкĕ кăна пухнă.

Политикăллă-массăллă ĕçе татах та ытларах вăйлатмалла

ВАРМАР, июнĕн 14-мĕш. (Телефон тăрăх). Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема сарас тĕлĕшпе пуринчен малта Арапуç ялсоветĕ пырать. Кунта ĕçлеме пултаракан пур колхозниксем те çĕнĕ заема çырăнса илнĕ.

Пĕтĕм ялсоветĕпе çĕнĕ заем 17.100 тенкĕлĕх сарнă, вăл бюджетпа пăхнă суммăран 6.300 тенкĕ ытларах пулать. Подписка уçăмне пĕтĕмпех пуçтарса çитернĕ, çĕнĕ заемăн облигацийĕсене пур колхозниксемпе единоличниксене те салата панă.

Арапуç ялсоветĕнчи финанс активĕ заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсем, комсод членĕсем хăйсен чăн-чăн организаторла пултарулăхне анлăн кăтартса пачĕç. А. Никитин юлташ пирвайхи кунсенчех çĕнĕ заема 3100 тенкĕлĕх вырнаçтарса тухрĕ, ун хыççăн пĕр-ик кун хушшинче подписка уçăмне пухса пĕтерчĕ. Çавăн пекех М. Кириллов, В. Федотов, Г. Максимов, И. Иванов юлташсем те хастарлăн ĕçлерĕç. Вĕсем çĕнĕ заема 2100—2500-шер тенкĕлĕх сарса, подписка уçăмне çийĕнчех пухса çитерчĕç.

Çĕнĕ Вĕренерти заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй Николай Васильев юлташ хăй пĕччен подписка уçăмне 5800 тенкĕ пухнă. Кунти колхозниксем заем уçăмне пурте парса татнă. Е. Чернова юлташ (Чиршăмă ялĕ) 2825 тенкĕлĕх сарса, подписка уçăмне те çавăн чухлех пухса панă.

Паянхи куна Чикĕç, Шăхаль ялсоветĕсем те подписка уçăмне пухса çитернĕ, çĕнĕ заема бюджетпа пăхнă суммăна чухлĕ сарнă. Апчах ку ялсоветсенче чылай колхозниксемпе единоличниксресченсем çĕнĕ заема çырăнса илмесĕр юлнă-ха. Сăмахран, Шăхаль ялсоветĕнче ĕçлеме пултаракансенчен 65 процентĕ çеç заем çырăнса илес ĕçе хутшăннă.

Пĕтĕм районĕпе илсен, çĕнĕ заема бюджетпа пăхнă суммăран иртнĕрсене сарнă. Çапах та рабочисемпе служащисене, колхозниксемпе единоличниксресченсене заем çырăнса илес ĕçе пурне те мар явăçтарнă. Подписка уçăмне пĕтĕмпе 136 пин тенкĕ пухнă.

Заем сарас, подписка уçăмне пухас ĕç вăйланса пырать. Апла пулин те политикăллă-массăллă ĕçе татах та ытларах вăйлатни кирлĕ, çавна май пур ĕççыннисене те заем çырăнса илес ĕçе явăçтармалла.

Д. ЯКОВЛЕВ.
Районри перекет кассин заведующийĕ.

Заема вырнаçтарас ĕç вăйланса пырать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 14-мĕш. (Телефон тăрăх). Кăçалхи çĕнĕ заема çырăнса илес ĕçе районĕпе 7.328 çын хутшăннă. Подписка суммине 464 пин тенкĕ, иртнĕ çултинчен 141 пин тенкĕ ытларах. Заема вырнаçтарас ĕç вăйланса пырать.

Иртнĕ çулта 14 кун хушшинче подписка уçăмне 38.000 тенкĕ пухнă пулсан, кăçал 13 кун хушшинче 55.000 тенкĕ пухнă. Ку ĕç Янкас тата Супар ялсоветĕсенче ăнăçлăн пулса пычĕ. Степан Разин ячĕпе тăракан колхозри заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй Л. Спиридонов юлташ çĕнĕ заема 1715 тенкĕлĕх вырнаçтарса, уçăмне те çийĕнчех пухса çитерчĕ. Именкассинчи «Коминтерн» колхозра Т. Федотов, «Сила» колхозра С. Кузьмин юлташсем те хастарлăн ĕçлерĕç. Вĕсем заема çырăнтарас ĕçе туса пынă чухнех подписка уçăмне те пĕтĕмпех пухса пычĕç.

Подписка уçăмне пухас тĕлĕшпе Шупуç тата Тĕрер ялсоветĕсем кая юлса пыраççĕ.

Т. ИВАНОВ.
Районри перекет кассин заведующийĕ.

Заема пурте çырăнса илчĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Супар ялсоветĕнчи «Сила» колхозра ĕçлеме пултаракансем 90 çын. Вĕсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема пирвайхи кунах 3265 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç, тепĕр кунне подписка уçăмне пĕтĕмпех парса татрĕç.

П. СЕМЕНОВ.

Выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлер

Нумаях та пулмасть СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Колхозсенчи выльăх-тĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем çинчен» постановлени кăларчĕ. Ку постановлението пурнăçа кĕртсе пыни пирĕн çĕршывра выльăх-чĕрлĕх шутне тата унăн продуктивлăхне чылай ӳстерме пулăшать.

Пуринпĕн те паллă: хăш колхозра выльăх-чĕрлĕх усрамалли сарайсемпе витесем лайăх тата вĕсем валли кирлĕ чухлĕ апат хатĕрленĕ, ăçта выльăх апатне тирпейлĕ тытаççĕ, çавăнта выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕ ӳссе пыни уççăнах курăнать. Çапах çакна пирĕн хăшпĕр колхоз руководителĕсем тĕплĕн ăнланса илменех-ха, уйрăм колхозсенче çулсерен выльăх-чĕрлĕх апачĕ çитмест. Çавна пула вара çуркунне выльăхсем начарланса каяççĕ.

Иртнĕ çулти хăшпĕр тĕслĕхсене илер. Районри колхозсем пĕтĕмпе выльăх апачĕсем 1084 гектар çинчен пуçтарса илнĕ. Вăл шутран утăлăх вика 280 гектар, силос культурисем 47, тымар-çимĕççем 30 гектар. Вика, силослăх культурăсем акас тата тымар-çимĕççем туса илес плана эпир тултарайманăр. Мĕншĕн тесен уйрăм колхозсен руководителĕсем ĕç çине çиелтен пăхрĕç. Сăмахран, «Красноармеец» (Улхаш ялсоветĕ), «Большевик» (Егоркино), «Новая жизнь» (Пояндайкино), «1-ое мая» (Кăмаша) т. ыт. колхозсем выльăх апачĕсем туса илмелли плана тултарайманăрĕç, вĕсем выльăхсене улăмсемпе усрарĕç. Çакна пула вара вĕсен выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕ, уйрăмăнах сĕт суса илесси чакрĕ. Пачах урăхла картина Ворошилов ячĕпе тăракан тата «Красный Октябрь» колхозсенче. Вĕсем иртнĕ çулта сĕтеклĕ апат сахал мар хатĕрленĕ, вăл выльăхсем валли çителĕклĕ пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл колхозсенче сĕт суса илессипе паха результатсем кăтартрĕç.

Кăçал эпир выльăх апачĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе иртнĕ çултинчен хăшпĕр улшăнусем турăмăр. Районĕпе илсен утăлăх вика 480 гектар, клевер 144 гектар акнă. Кусемсĕр пуçне тата иртнĕ çулта акнă клевера 1424 гектар çинчен тата 1913 гектар çаран утă çулса илмелле. Çав хушăрах силос тумалли культурăсем тата тымар-çимĕççем сахалтарах акнă-ха. Ку тĕлĕшпе çитес вăхăтрах пирĕн пысăк ĕçсем туса иртермелле.

Уйрăм колхозсенче кăçал та сĕтеклĕ апатсем хатĕрлес тĕлĕшпе япăх ĕçлени сисĕнет. Пояндайкинори «Новая жизнь» колхоз акă (председателĕ Ефитеров юлташ) иртнĕ çулта та выльăх апачĕсем сахал туса илнĕ, кăçал те вăл плана тултарайман, 150 гектар клевер акас вырăнне 38 гектар çеç акнă, тымар-çимĕççем те çителĕксĕр акнă.

Çакна та палăртмалла: уйрăм колхозсенче выльăх апачĕсене, уйрăмах тымар-çимĕççене тирпейлĕ тытмаççĕ, çĕртсе янă тĕслĕхсем те пур. Çителĕклĕ таран хранилищесем хатĕрлеменнине пула, иртнĕ кĕркунне Турханти «Комбинат» колхозра выльăх кăшманне шăнтса янă пулнă, «Волга» колхозра выльăхсене çитермелли çĕрулминех пăру витине хунă та чылай çĕртсе янă. Ку колхозрах силос хунă вырăнсене витмен (башнясем туман) пирки, силос шăтăксене шыв кĕнĕ т. ыт. те.

Çак çитменлĕхсем ан пулччăр тесен, выльăх апачĕсене пухса кĕрес ĕçе халех хатĕрленмелле. Чăн малтан овощехранилищесем тумалла, шăтăксем чавмăлла т. ыт. çурт-йĕрсене йĕркелемелле.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстермелли мероприятисене эпир ăнăçлăн пурнăçласа пымаултаратпăр, ăна валли пирĕн пур условисем те çителĕклĕ.

В. АНДРЕЕВ.
Çĕмĕрле райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Тырпул пухса кĕме хатĕрленес ĕçе хăвăртлатмалла

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри колхозсем çуракине кĕске срокра, ăнăçлăн ирттерчĕç.

Çуракине ирттерни—вăйлă тырпул туса илес ĕçĕн пуçламăшĕ кăна. Халĕ калчасене лайăх пăхса ӳстермелле. Анса пулнă тырпулсене кĕске срокра тата пĕр тăкаламасăр пухса кĕртесси—ответлă ĕç.

План тăрăх, районри колхозсен кĕрхи тырпула 6 кун, çурхи тырпула 8 кун хушшинче пухса кĕртмелле. Планра кăтартнă вăхăтра пухса кĕрес пулсан, паллах, ялхуçалăх машинисемпе—жнейкăсемпе, комбайнсемпе, лобогрейкăсемпе туллин усă курмалла. Кăçалхи уборка вăхăтĕнче районри колхозсен уйăрĕсенче 16 комбайн, 190 жнейка ĕçлемелле. Комбайнсемпе жнейкăсене юсас ĕç районра мĕнле пырать-ха? Районри нумай колхозсем уборкăна хатĕрленме тытăнман. Машинно-тракторнăй станцисем те уборкăна вăрахăн хатĕрленсе пырать. Июнĕн 8-мĕш тĕлне 92 жнейка, 13 комбайн моторне çеç юсанă. «Ленинское знамя», «Красное Сормово», «Искра», «Красный Октябрь», «Большевик» колхозсем жнейкăсене, урапасене юсама тытăнман та. «Большевик» колхозăн 37 урапа, 6 жнейка, 2 лобогрейка, 3 сортировка юсамалла. Уборкăра миçе михĕ, шăналăк кирлине шута илмен. Пирĕн районра Елчĕк районĕпе ăмăртать. Ăмăрту договорĕнче жнейкăсемпе комбайнсене майăн 20-мĕш тĕлне, молотилкăсене июнĕн 1-мĕш тĕлне юсаса пĕтермелле тенĕ. Анчах çакна кăтартнă вăхăтра пурнăçлаймарĕç.

Уборка вăхăтĕнче çумăрлă кунсем пулма пултараççĕ. Çавăнпа та колхозсенче авăн çапма витнĕ итемсем, сушилкăсем, авăнсем тумалла, пуррисене юсаса çитермелле. Анчах та асăннă ĕçсене районри колхозсенче тума тытăнман-ха. Нумай колхозсенче (Большевик», «Игенче», «Кзыл Сабанча», «Красный маяк» тата ытти колхозсенче те) уборка валли ятарласа тунă ĕç планĕсем çук. Машинно-тракторнăй станци те уборкăна хатĕрленес ĕçе тивĕçлипех тытăнман. Комбайнсемпе ĕçлеме тракторсем уйăрса çирĕплетмен. Колхозсенче комбайн патĕнче ĕçлеме—горючи, шыв турттарса пыма тасатма, улăм кăпанне хывма тата ытти ĕçсене тума çынсем уйăрман.

М. ЯКОВЛЕВ.

Заем сарас ĕçĕн ăнăçлăхне çирĕплетессишĕн

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема июнĕн 14-мĕш тĕлне 24.712.000 тенкĕлĕх сарнă, урăхла каласан, бюджетпа пăхнă суммăна 104,8 процент тултарнă, иртнĕ çулти подпискăпа танлаштарсан 3.796 пин тенкĕ ытларах вырнаçтарнă.

Рабочисемпе служащисем хушшинче заема 18.191 пин тенкĕлĕх, бюджетпа пăхнă суммăран 491 пин тенкĕ, иртнĕ çултинчен 1.763 пин тенкĕ ытларах сарнă. Колхозниксемпе единоличниксресченсем хушшинче çĕнĕ заем 6.521 пин тенкĕлĕх сарăлнă, вăл бюджет тăрăх пăхнă суммăран 642 пин тенкĕ, иртнĕ çулти подпискăран 2.033 пин тенкĕ ытларах пулать.

Çакна палăртса хăварни кирлĕ: бюджет тăрăх вырнаçтарса тухма палăртнă хисепе пĕтĕм республикăпе 4 кун хушшинче, рабочисемпе служащисем хушшинче заем сарас ĕç 6 кунра, колхозниксемпе единоличник-хресченсем хушшинче 12 кунра вĕçленнĕ.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема рабочисемпе служащисем хушшинче сарас ĕçе Хĕрлĕ Чутай, Калинински районсенче пĕр кун хушшинче, Шупашкар тата Шăхасан районĕсенче икĕ кун хушшинче, Шупашкар хулинче, Йăпреç, Ишлей, Комсомольски, Красноармейски, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕрпӳ, Тăвай районĕсенче виçĕ кун хушшинче, Канаш, Советски, Чкаловски, Шăмăршă, Етĕрне районĕсенче 4 кун хушшинче, Сĕнтĕрвăрри тата Октябрьски районсенче 5 кун хушшинче, ытти районсем 6—7-мĕш кунсенче вĕçленĕ. Куславкка, Первомайски, Сĕнтĕр районĕсем тата Улатăрпа Çĕмĕрле хулисем июнĕн 14-мĕшĕ тĕлне те çĕнĕ заема бюджет тăрăх пăхнă сумма чухлĕ вырнаçтарса тухайман.

Колхозниксемпе единоличник-хресченсем хушшинче заем сарас ĕçе бюджет тăрăх пăхнă виçе чухлĕ Хĕрлĕ Чутай, Калинински, Элĕк тата Вăрнар районĕсем пĕр кун хушшинче, Йăпреç, Комсомольски, Красноармейски, Первомайски, Пăрачкав, Советски, Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăмăршă тата Елчĕк районĕсем икĕ кун хушшинче, Ишлей, Канаш, Сĕнтĕр, Шăхасан, Çĕмĕрле тата Тăвай районĕсем виçĕ кун хушшинче, ытти пилĕк район 4—5 кун хушшинче вырнаçтарнă. Улатăр, Куславкка тата Куваккино районĕсем июнĕн 14-мĕшне бюджет сумми чухлĕ çĕнĕ заема вырнаçтарса тухайман.

Июнĕн 14-мĕш тĕлне колхозниксемпе единоличник-хресченсем подписка уçăмне 1.464 пин тенкĕ тӳленĕ, вăл пĕтĕм подписка суммине танлаштарсан 22,5 процент пулать. Ку тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай районĕ (районри перекет кассин заведующийĕ Самсонов юлташ) малта пырать. Вăл подписка уçăмне 52,7 процент пухнă. Çавнашкалах Вăрмар районĕ (перекет кассин заведующийĕ Яковлев юлташ)—57,9, Чкаловски (перекет кассин заведующийĕ Гильманов юлташ) —59,5, Шăмăршă (перекет кассин заведующийĕ Вишневская юлташ)—52,4, Çĕрпӳ (перекет кассин заведующийĕ Алексеев юлташ)—33,6, Елчĕк (перекет кассин заведующийĕ Данилов юлташ)—31,4 процент пухнă. Анчах уйрăм районсем подписка уçăмне пухас тĕлĕшпе кая юлса пыраççĕ. Вĕсен шутне çак районсем кĕреççĕ: Тăвай районĕ—2,9, Куваккино—6,1 тата Октябрьски район 6,1 процент пухнă.

Çак районсем политикăллă-массăллă ĕçе пĕлтĕрхи пекех тивĕçлипе туса пыраймарĕç. Сăмахран, Тăвай районĕнче иртнĕ çулти çитменлĕхсене шута илсе, кăçалхи заема сарас ĕçе лайăх организацилес вырăнне, правительствăна суя сведенисем тăратас çул çине тăнă. Июнĕн 3-мĕш тĕлне районри перекет кассинче рабочисемпе служащисем хушшинче 154 пин тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличник-хресченсем хушшинче 19 пин тенкĕлĕх сарни çинчен документсем пулнă пулсан, кунти работниксем çулти органсене (Октябрьски тата Тăвай районĕсенче) заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсене райсовет исполкомне чĕнмесĕрех çирĕплетнĕ, çитменнине тата вĕсене инструктаж та памаллах пулнă. Çавна пула уйрăм уполномоченнăйсем заем подписки не йĕркеленĕ те малалла ĕçлеме пăрахнă. Хальхи вăхăтра пур уполномоченнăйсем ĕçне те тĕрĕслесе, вĕсем подписчиксене квитанцисем панине паманнине тишкерсе тухас пулать. Кашни колхозникпа единоличник-хресченĕн алăра квитанци пулмалла тата заем облигацийĕсене ĕççыннисене валеçсе памалла. Çавăнпа та заем уполномоченнăйĕсен составне çирĕплетмелле. Çак ĕçе тӳрĕ кăмăллă сынсене, партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлекен сынсене уйăрмалла.

Иртнĕ çулти çитменлĕхсене шута илес пулать. Ун чухне хăшпĕр районсенче (Октябрьски тата Тăвай районĕсенче) заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсене райсовет исполкомне чĕнмесĕрех çирĕплетнĕ, çитменнине тата вĕсене инструктаж та памаллах пулнă. Çавна пула уйрăм уполномоченнăйсем заем подписки не йĕркеленĕ те малалла ĕçлеме пăрахнă. Хальхи вăхăтра пур уполномоченнăйсем ĕçне те тĕрĕслесе, вĕсем подписчиксене квитанцисем панине паманнине тишкерсе тухас пулать. Кашни колхозникпа единоличник-хресченĕн алăра квитанци пулмалла тата заем облигацийĕсене ĕççыннисене валеçсе памалла. Çавăнпа та заем уполномоченнăйĕсен составне çирĕплетмелле. Çак ĕçе тӳрĕ кăмăллă сынсене, партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлекен сынсене уйăрмалла.

Иртнĕ çулти çитменлĕхсене шута илес пулать. Ун чухне хăшпĕр районсенче (Октябрьски тата Тăвай районĕ

Заем сарас ĕçĕн ăнăçлăхне çирĕплетессишĕн

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема июнĕн 14-мĕш тĕлне 24.712.000 тенкĕлĕх сарнă, урăхла каласан, бюджетпа пăхнă суммăна 104,8 процент тултарнă, иртнĕ çулти подпискăпа танлаштарсан 3.796 пин тенкĕ ытларах вырнаçтарнă.

Рабочисемпе служащисем хушшинче заема 18.191 пин тенкĕлĕх, бюджетпа пăхнă суммăран 491 пин тенкĕ, иртнĕ çултинчен 1.763 пин тенкĕ ытларах сарнă. Колхозниксемпе единоличник-хресченсем хушшинче çĕнĕ заем 6.521 пин тенкĕлĕх сарăлнă, вăл бюджет тăрăх пăхнă суммăран 642 пин тенкĕ, иртнĕ çулти подпискăран 2.033 пин тенкĕ ытларах пулать.

Çакна палăртса хăварни кирлĕ: бюджет тăрăх вырнаçтарса тухма палăртнă хисепе пĕтĕм республикăпе 4 кун хушшинче, рабочисемпе служащисем хушшинче заем сарас ĕç 6 кунра, колхозниксемпе единоличник-хресченсем хушшинче 12 кунра вĕçленнĕ.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заема рабочисемпе служащисем хушшинче сарас ĕçе Хĕрлĕ Чутай, Калинински районсенче пĕр кун хушшинче, Шупашкар тата Шăхасан районĕсенче икĕ кун хушшинче, Шупашкар хулинче, Йăпреç, Ишлей, Комсомольски, Красноармейски, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕрпӳ, Тăвай районĕсенче виçĕ кун хушшинче, Канаш, Советски, Чкаловски, Шăмăршă, Етĕрне районĕсенче 4 кун хушшинче, Сĕнтĕрвăрри тата Октябрьски районсенче 5 кун хушшинче, ытти районсем 6—7-мĕш кунсенче вĕçленĕ. Куславкка, Первомайски, Сĕнтĕр районĕсем тата Улатăрпа Çĕмĕрле хулисем июнĕн 14-мĕшĕ тĕлне те çĕнĕ заема бюджет тăрăх пăхнă сумма чухлĕ вырнаçтарса тухайман.

Колхозниксемпе единоличник-хресченсем хушшинче заем сарас ĕçе бюджет тăрăх пăхнă виçе чухлĕ Хĕрлĕ Чутай, Калинински, Элĕк тата Вăрнар районĕсем пĕр кун хушшинче, Йăпреç, Комсомольски, Красноармейски, Первомайски, Пăрачкав, Советски, Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăмăршă тата Елчĕк районĕсем икĕ кун хушшинче, Ишлей, Канаш, Сĕнтĕр, Шăхасан, Çĕмĕрле тата Тăвай районĕсем виçĕ кун хуш

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизацисен умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ

Кăçалхи сураки колхозниксемпе колхозницăсен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ пысăк пулнипе иртрĕ. Санталăк сивĕ тата çăмăрлă тăнĕ пулсан та, суракине лайăх, агротехника правилисене тĕрĕс пăхăнса ирттернĕ. Вăйлă тырпулăн кĕрешнĕ чухне колхозниксем кашни минутăна шута илсе ĕçлерĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсемпе тата колхозниксене ĕçĕн хушса тăлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленисемпе хавхаланса, кăçалхи суракине ăнăçлăн ирттерчĕç.

Пуçламĕш парторганизацисем тата уйрăм коммунистсем массăпа тачă çыхăнса ĕçлени тăрăх 1941 çулти суракине хатĕрленес тата ăна ирттерес ĕçе лайăх ертсе пычĕç.

Юськассинчи территориллĕ пуçламĕш парторганизаци çуракине тĕплĕн хатĕрленес тата ăна ирттерес ĕçе ертсе пыраççине хăй çине илчĕ. Çакна пула «Комбайн» колхоз кăçалхи суракине ăнăçлă ирттерчĕ, агротехника правилисене тĕрĕс пурнăçларĕ. Çак колхозри ака ĕçне пуçламĕш парторганизаци секретарĕ С. Тихонов юлташ хăй ертсе пычĕ. Тихонов юлташ сураки вăхăтĕнче колхозра, бригадăсенче тата звеносенче политикăллă агитаци ĕçне туса пыма комсомолецсене, беспартийнăй активистсене куллен ĕçе хутшăнтарчĕ. Агитаторсем иртен пуçласа кăсченех уйăрте ĕçленĕ. Кашни бригадăра темиçешер номер стена хаçачĕ кăларнă.

Тогачевăри партин XVIII съезчĕ ячĕпе тăракан колхоза коммунист М. Федоров юлташ ертсе пырать. Çуракине пур енчен те лайăх хатĕрленни колхоза çуракине нихçанхинчен те ытларах лайăх ирттерме май парать. Колхоз çуракине 4 кунта ирттерчĕ. Çак колхозри Кириллов юлташ ертсе пыракан бригада çуракине 3 кун хушшинче вĕçлерĕ.

Колхозра политикăллă агитаци ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Комсомолец Андреев юлташ пĕрремĕш бригадăра 6 номер, Кириллов юлташ 5 номер стена хаçачĕ кăларнă. Колхозри паллă агитатор, стахановец Трофимов юлташа республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

«Заветы Ильича» колхоза та ВКП(б) членĕ Ф. Федоров юлташ ертсе пырать. Колхоз кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса пырать. Колхозра Петров юлташ пек стахановецсем вунпăрăн ӳссе çитĕнчĕç. Коммунистсем ертсе пыракан колхозсем кăçал пурте тенĕ пекех ака ĕçне ăнăçлă вĕçлерĕç. Ку вăл ялхуçалăх ĕçĕсемшĕн коммунистсен ответлăхĕ ӳссе пынине кăтартать.

Ялти коммунистсен колхоз производствинчи ролĕ те ӳсех пырать. Вĕсем хăйсен примерĕпе ытти колхозниксене ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх туса пыма, ĕç дисциплинине çирĕплетме, ĕç тухăçлăхне ӳстерме мобилизацилеççĕ. Иванкăри коммунист Андреев юлташ çуракинче сухаç пулса ĕçлерĕ. Вăл кулленхи нормăна яланах 150—160 процент таран тултарса пычĕ. Андреев юлташ çуракинче кăна 45 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Тавăтри колхозри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ К. Шариков юлташ 13 ретлĕ сеялкăпа тырă акнă çĕрте ĕçленĕ. Вăл кашни кун 14-шар гектар акнă. Йăлкăшри парторганизацинчи коммунист Ефимов юлташ та кашни кунхи нормăна ытлашшипех тултарнă. Çакăн пек коммунистсем районра вуншăрăн шутланаççĕ.

Анчах та парторганизацисен ĕçĕсенче çитменлĕхсеем те сахал мар. Устинири кандидатсен группи çуракивăхăтĕнче агитаци ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Коммунистсем колхоз производствинче пример кăтартса ĕçлемен. ВКП(б) членĕ Т. Вершинина колхоз производствинче примерлă ĕçлес вырăнне, ĕçе тухмасăр тăнă.

Машинно-тракторнăй станцинчи пуçламĕш парторганизаци те кăçал çителĕклĕ ĕçлемерĕ. МТС трактор ĕçĕсен планне июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 70 процент кăна тултарнă. Пуçламĕш парторганизаци те, МТС дирекцийĕ те трактористсене çуракине ăнăçлă ирттересшĕн большевикла кĕрешме мобилизацилемен. ВКП(б) райкомĕ халĕ машинно-тракторнăй станцине ытларах пулăшассине хăйĕн пысăк ĕçĕ тесе шутлать.

Кăçал пуçламĕш парторганизацисем, коммунистсем единоличниксене колхоза кĕме пулăшас тĕлĕшпе чылай ĕçлерĕç. Единоличниксене колхоз кашни ĕçхресченĕшĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăç тумалли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул пулнине конкретлă примерсемпе фактсем тăрăх ăнлантарса пачĕç. Çакна пула кăçалхи çулăн январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 1-мĕшне çитиччен 238 хуçалăха колхоза явăçтарнă. Анчах та единоличниксем хушшинче ĕçлессине пĕрре те вăйсăрлатма юрамасть, халĕ вĕсем пирĕн районра 700 хуçалăхран та ытларах.

Çураки ĕçĕсем вĕçленчĕç. Халĕ парторганизацисем умĕнче тăракан задача—вăл тырпулсене лайăх пăхса ӳстересси, вĕсене пухса кĕртме большевикла хатĕрленесси пулать. Халĕ Элĕк районĕнчи парторганизаци тырпулсене уйăртен пухса кĕртме июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне пур енчен те хатĕрленсе çитессишĕн кĕрешет.

М. КУЗЬМИН.
ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ.

Парторганизаци лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕ

ШАХАСАН. Анат Сурăм ялсоветĕнчи территориллĕ пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем тата парторганизаци колхозсене çителĕксĕр ертсе пынине, комсомол организацине пулăшу паманнине, общественнăй организацисен (СВБ, Осоавиахим, МОПР) ĕçĕсемпе интересленменнине кăтартса хăварнăччĕ. Ял хушшинче агитаци ĕçне çителĕксĕр сарса пыни, коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлӳлĕхĕсене ӳстерес тĕлĕшпе сахал ĕçлени çинчен асăрхалтарнăччĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕнчи критикăран пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Васильев юлташ хăйне ĕçлеме çирĕп вывод турĕ. Коммунистсем те, хăйсем валли вывод туса, пĕтĕм ĕçе лайăхлатма тытăнчĕç.

Парторганизаци кăçалхи сураки ĕçĕсене лайăх ертсе пычĕ. Сураки вăхăтĕнче кашни бригадирах агитаторсем агитаци ĕçне анлăн сарса пычĕç.

Çуракине вĕçленĕ хыççăн унăн итогĕсем çинчен парторганизацин пухăвĕнче сӳтсе-явнă. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мероприятисем тума палăртнă.

Комсомол организацине пулăшас, ăна ертсе пырас тĕлĕшпе те нумай улшăнусем тунă. «Заря», «Красное Сормово» колхозсенчи комсомол пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсенчен отчетсем итлениçĕр пуçăр, пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Васильев юлташ вĕсемпе яланах каласусем туса ирттерет, конкретлă пулăшу парать. Комсомолецсен пухăвĕсенче коммунистсем те пулаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ юлашки вăхăтра колхозсенчи комсомол организацисем чылай лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç.

Коммунистсен пурин те партиллĕ порученисем пур. Поручениесене пурнăçлассишĕн коммунистсем çине тăрсах ĕçлеççĕ. П. Константинов коммуниста Осоавиахим пуçламĕш организаци сумне çирĕплетнĕ. Халĕ ку организаци план тăрăх ĕçлесе пырать, членсем член укçине вăхăтра тӳлеççĕ, организацине çĕнĕ членсем хутшăнаççĕ. Иванов юлташ МОПР организацин ĕçне лайăх йĕркелерĕ.

В. НИКОНОРОВ.

ВКП(б) Элĕк райкомĕн пленумĕ

Июнĕн малтанхи кунĕсенче ВКП(б) Элĕк райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум пуçламĕш организацисен отчетпа суйлав пухăвĕсен итогĕ тата çĕнĕрен суйланă секретарьсене вĕрентесе пыракан çинчен, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 15-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси мĕнле тăни çинчен сӳтсе-явса тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Чылай пуçламĕш парторганизаци секретарĕсем отчетпа суйлав пухăвĕсен решенийĕсене пурнăçа кĕртсе хăйсен ĕçĕсене лайăхлатса пыраççĕ. Мăн Вырăс Сорăмĕнчи тата Ефремкассинчи пуçламĕш парторганизацисем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне нумай лайăхлатрĕç. Кашни бригадăра, звенора агитаторсем ĕçлеççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси хăшпĕр колхозсенче çителĕксĕр тăрать. Панкли, Осипкасси, Шарыпкка ялĕсенчи колхозсенче ĕçе звеносем тăрăх организацилемен. Çак çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене райком пленумĕ тĕплĕн палăртса хăварчĕ.

Ф. РОМАНОВ.

Физкультурниксен кунĕ умĕн

Физкультурниксен Пĕтĕм Союзри кунĕ совет çамрăксĕн чаплă праздникĕ пулса тăрать. Çавăнпа та вăл куна хулара та, ялта та çамрăксем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ. Физкультурниксен кунне хатĕрленесси Шăхасан районĕнче те сарăлсах пырать. Физкультурăпа спорт ĕçĕсен районри инспекторĕ Митин юлташ тăрăшнипе районри колхоз çамрăксемпе шкул ачисем ку ĕçе активлăн хутшăнчĕç.

Çĕнĕ-Чалкассинчи шкулта вĕренекен 17 ача БГТО нормине пачĕç. Кăçал призыва кĕрекен çамрăксенчен 98,9 проценчĕ ГТО нормине панă.

Çавăн пекех, Вăрман-Енĕшри «Свобода» колхоз çумĕнчи физкультура коллективĕ, комсомол комитечĕ тата колхоз пулăшнине, физкультура площадкине йĕркеленĕ.

Физкультурăпа спорт ĕçĕ районра мĕнле тăнипе райсовет исполкомĕ те яланах интересленет. Нумай пулмасть вăл физкультура ыйтăвне исполком ларăвĕнче пăхса тухрĕ. Кăçал район центрĕнче волейболпа футбол площадкисем йĕркеленĕ. Физкультурниксен кунне хатĕрленнĕ май çамрăксем хушшинче тренировка ĕçĕ те чылаях авалланчĕ: çамрăксем чупас, гимнастика тăвас, граната ывăтас, турник çинче выляс енĕпе тренировкăсем ирттереççĕ. Вĕсемех комсомолецсемпе профсоюзсен кросне хутшăнаççĕ. Кроса хутшăнса малти вырăна тухассишĕн командăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Е. НИКИТИН.

ЧУГУНÇУЛ ТРАНСПОРТНЕ — СОЦИАЛИЗМЛА ПУЛАШУ. Çĕрпӳ районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чугунçул линийĕ çинче ĕçлеççĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ Д. А. Андреев тата колхоз председателĕ К. П. Яковлев юлташсем.

К. БАБАЕВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Ну, тухса каласăр тата...

Председатель пулса ертсе пыраканĕ Пухова юлташ комсомолецсемпе комсомолкăсем çинче темиçе хутчен те пăхапăха çаврăнчĕ. Çапах та пухура ларакансем пурте шăп лараççĕ.

— Ну, тухса каласăр тата ... — илтĕнчĕ каллех Пухова юлташăн сасси. Анчах никам та «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» харпăрăй тĕллĕн мĕнле вĕренни çинчен калама шутламасть.

— Что, персонально вызывать?... — ăнтранă енне ура çине сиксе тăрса кăшкăрĕ ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ Порфирьев юлташ.

Пухура, пасăрхи пекех, шăп. Ара, шăп пулмасăр! Мĕн çинчен тухса каласчĕр-ха комсомолецсем?

Организацинчи 17 комсомолецран пĕри те партин историне вĕренме тытăнман. Хăйсем каланă тăрăх, Трапезникова Григорьев юлташсем халхи вăхăтра «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» 2-мĕш сыпăкне, Порфирьев — 9-мĕш, Гуськов — 11-мĕш сыпăксене вуласçĕ. Пастухова комсомолка партин историне пачах вĕренмест. Кунсăр пуçне организацири комсомолецсемпе комсомолкăсенчен чылайăшĕ тĕнчери лару-тăру, тăван çĕршывра пулса иртекен паллă событисем çинчен пĕлмеççĕ.

— Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ мĕнле ыйтусем сӳтсе-явнă? — ыйтрăмăр эпир Пастухова комсомолкăран.

— Тĕрĕссипе калатăп: астумастăп... — ответлерĕ вăл.

— Апла пулсан, Андреев юлташ, эсир каласа парăр.

— Эпĕ ун чухне Канашри çыхăну уйрăмĕнче ĕçлемен те, пĕлместĕп çав... — терĕ вăл.

VIII партконференцин решенийĕсене пĕлмен комсомолецсем ку организацире татах та пур. Тӳрех каламалла, çыхăну уйрăмĕнчи комсомолецсем хушшинче кăна мар, ытти служащисем хушшинче те политикăллă-массăллă ĕçе ăнăх туса пыраççĕ. Çавăнпа та ку тапхăрченех çыхăну уйрăмĕн ĕçне ВКП(б) XVIII конференцин решенийĕ хушшă пек лайăхлатни курăнмасть-ха.

Хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитермеççĕ, телефонсем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ, нумай чухне телефонпа каласшă хыççăн «отбой» паннине телефонисткăсем çийĕнчех тĕрĕслесе тăмаççĕ, хаçат-журнал сарас плана тултарман, тасалăхпа йĕркелĕхшĕн начар кĕрешеççĕ.

Почтăра ĕçлекен 8 телефонисткăран чылайăшĕ комсомолкăсем. «Союзпечать» конторин начальникĕн ĕçĕсене вăхăтлăха тăваканĕ Иванов юлташ комсомол ретĕнче тăрать. Анчах вăл июнь уйăхĕнче районри «Коммунизмăн» хаçата сарас плана 700 экземпляр чухлĕ тултарман. Иванов хăйĕн политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе те сахал ĕçлет.

Парти пуçламĕш организацийĕ комсомол организацине кирлĕ пек ертсе пымасть. Çавăнпа комсомолецсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕç сӳнсе ларнă. Организацинчи комсомолецсем хушшинчи дисциплина та çирĕп мар. Член укçи пухса çитермен. Трапезников комсомолец 3 уйăх ытла член укçи тӳлемен. Тодьянов, Трапезников, Сугарова юлташсем член билечĕсене хăйсемпе пĕрле илсе сӳремеççĕ. Вĕсем июнĕн 6-мĕшĕнче пулнă пухăва та член билечĕсемсĕрех пынă.

— Партиллĕ пропаганда ĕçне мĕншĕн сӳрĕккĕн туса пыратăр? — тесе ыйтсан, комсомол комитечĕн секретарĕ Порфирьев юлташ çапла ответлерĕ:

— Партиллĕ пропагандăна хамăр вăйпа организацилеме пултараймастпăр. Çавăнпа пире уйрăм пропагандист кирли çинчен ВЛКСМ райкомĕн секретарĕпе — А. Г. Кузнецов юлташпа темиçе хутчен те каласăнă ĕнтĕ. Вăл пире уйрăм пропагандист тупса параймарĕ, парткабинетра пулакан лекцисемпе докладсене ытларах сӳреме хушрĕ.

«Уйрăм пропагандист» тупса парасса кĕтсе ларнипех ĕнтĕ организацире кăçал парти историне вĕренекенсене пулăшас шутпа пĕр лекци те, доклад та туса ирттермен. ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ çыхăну уйрăмĕн çуртĕнчен пурĕ те 300 метрта кăна ларать. Анчах ку организацири комсомолецсем унти лекцисемпе докладсене сахал сӳреççĕ.

— Акă, пĕрехинче тĕнчери лару-тăру çинчен пулакан лекцие кайма тесе 8 билет илтĕм те, [illegible]-шне кăна аран-аран сутрăм, яхăнне те илмеççĕ вĕт,—тет Порфирьев юлташ.

Ку фактсем организацири комсомолецсем хушшинче дисциплина çителĕксĕрри çинчен каласçĕ.

Çыхăну уйрăмĕнчи парти пуçламĕш организацин малашне комсомол организацине куллен ертсе пымалла, парти историне мĕнле вĕреннине тăтăшах сăнаса, тĕрĕслесе тăмалла, ĕçре пулăшса пымалла.

П. НИКОЛАЕВ.

Канаш хули.

Призывниксем çар ĕçне вĕренеççĕ

Шупашкарти педучилищĕра Хĕрлĕ Çар призывне хатĕрленес ĕç аван пырать. Кăçал призыва кĕрекен çамрăксем пурте комсомолецсем, Осоавиахим членĕсем.

Призывниксенчен 28 çын 4-шар обсроча заявкăсем илнĕ. Кунсăр пуçне вĕсем чылайăшĕ çар специалноçĕсене вĕренеççĕ. Сăмахран, Иванов, Исаев, Стаканов, Любимов юлташсем аэроклубра вĕренеççĕ, ыттисем пулеметчиксен кружокĕнчен вĕренсе тухрĕç.

Ефимов, Марков, Иванов призывниксем автомашинăпа çӳреме вĕренсе çитнĕ.

Н. РАЕВ.

Илнĕ обязательствăна мĕнле пурнăçласа пыраççĕ?

ÇЕМЕРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**) «Большевик» завод коллективĕ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пурнăçласа пынă май, юлашки уйăхсенче хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ завод график тăрăх ĕçлет, ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пырать, продукцин хăйне ларакан хакĕ чакать.

Завод коллективĕ çурçулти плана срокчен тултарасси çинчен дзержинецсем чĕнсе каланине анлăн сӳтсе-явнă хыççăн хăй те çак ăмăртăва хутшăнчĕ. Коллектив 6 уйăхри плана июнĕн 28-мĕшне тултарма, ĕç тухăçлăхне 2 процентран кая мар ӳстерме, продукцин хăйне ларакан хакне чакарма, пĕр тонна тоннида тума каякан вутăран пĕр кубометрне перекетлеме тата ĕç укçин фондне 2 процент перекетлеме обязательство илнĕччĕ.

Çак обязательствăна коллектив мĕнле пурнăçласа пырать-ха? Май уйăхĕн планне вăл 109 процент тултарчĕ. Июнĕн малтанхи 10 кунхи плана та ытлашшипех тултарнă. Вăтамран илсен завод ку уйăхра плана кашни кун 104 процентран кая мар тултарса пырать. Уйрăм кунсенче вара татах та лайăхрах тĕслĕхсем кăтартать. Сăмахран, июнĕн 3-мĕшĕнче вăл 27 тонна ытла тоннида туса кăларса, пĕр кунхи программăна 111,6 процент тултарчĕ. Юлашки вăхăтра уйрăмăнах Замятин юлташ смени лайăх результатсем кăтартать. Кулленхи плана вăл вăтамран 110 процентран кая мар тултарса пырать. Июнĕн 6-мĕшĕнче унăн смени плана 18,7 процент, 7-мĕшĕнче—4 процента яхăн, 8-мĕшĕнче—112 процент ирттерсе тултарнă.

— Диффузисем лайăх пулсан эпир çаланах ытларах продукци туса кăларма пултаратпăр. Мĕншĕн тесен, сменăри рабочисем ĕç техникине, технологи процесне лайăх пĕлеççĕ, пурте вĕсем хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ,—тет мастер Замятин юлташ.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе пример кăтартакансем кашни бригадăпа сменăрах, кашни цехрах сахал мар. Рубильщиксем Мартынов, Егоров, Грачев юлташсем сменăра 25 тонна вутă вакластăвăнне 30—32 тонна вакласçĕ, стахановец Борисов юлташ июнĕн 4-мĕшĕнче 45 тонна вутă вакласа, хăйĕн нормине 180 процент тултарчĕ. Выпарщиксем те ăмăртăва сарса пыраççĕ. Стахановецсем Горбунов тата Воробьева юлташсем уйăх пуçланнăранпа ялан нормăсене 8—15 процент ирттерсе тултараççĕ. Механически цехри паллă стахановец-слесарьсем Дерябинпа Моторин тата токарь Баранов юлташсем куллен икшер норма тултарсçĕ.

Анчах завод ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Иртнĕ уйăхра пулнă заводри хуçалăхлă-производствăллă активлăха канашлăвĕнче социализмлă ăмăртăва ертсе пыманни çинчен асăрхаттарнăччĕ. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Çапах та улшăнусем сахал пулнă-ха. Уйрăмăнах профсоюз организацийĕ куçыйту çине çиелтен кăна пăхать. Завком 1-мĕш кварталта тунă договорсене пурне те тĕрĕслемен, халĕ те илнĕ обязательствăсене кам мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăмасть. Иртнĕ уйăхсенче хăш бригада кулленхи плана мĕнле тултарнине кăтарту хăми çине сыратчĕç, юлашки вăхăтра темшĕн ăна та çырма пăрахрĕç, цехсенче стена хаçачĕсем те вăхăтра тухмассĕ.

Хăшпĕр кунсенче оборудованисемпе туллин усă курманни сисĕнет. Çавна пула завод июнĕн 7-мĕшĕнче плана 98 процент ытларах кăна тултарнă.

Завод коллективĕ хăй çине илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçлама пултарать, унăн условисем çителĕклĕ. Çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе, ăмăртăва анлăн сарса пыни кирлĕ.

Х. ЛИСИН.

Ялти активăн чысĕ

КАНАШ. Колхозсем организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплесе пынă май, ялти актив шучĕ çултан çулах ӳссе пырать. Ялсовет тата колхоз председательĕсем, ялсовет секретарĕсем, колхоз счетоводчĕсем, колхоз бригадирĕсем, звеноводсем, ферма заведующийĕсем, сельпо председательĕсем, лавкари продавецсем, финанс агенчĕсем, килсурт работникĕсем, колхоз производствин уйрăм отраслин заведующийĕсем, ялсовет депутачĕсем—çаксем пурте ялти актив пулса тăраççĕ. Вĕсемпе куллен ĕçлемелле. Совет гражданинĕн, партире тăрать-и вăл е партире тăмасть, актив шутĕнче-и вăл е активра мар,—чи пирвайхи обязанноçĕ рабочисемпе хресченсен государстви умĕнчи обязательствăсене тултарасси—малти вырăнта пулмалла, ялти активистсен, государство интересĕсене малти вырăна хурса, обязательствăсене тултарас ĕçре пăха пример кăтартса паракансем пулмалла.

Партипе правительство пирĕн активистсен ĕçне сăмах тăрăх мар, ĕç тăрăх хакласçĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене тултарас ĕçре хастарлăн ĕçлесе пыракан ялти активистсен хисепĕ нумай ӳсрĕ. Синкасси ялсовет председательĕ Матросов, колхоз председательĕ Суранов, Сугайкасси ялсовет председательĕ Платонов, Вăтакас Татмăш ялсовет секретарĕ Е. Фомин, çав ялсоветĕнчи «Динамо» колхоз счетоводчĕ Архипов юлташсем государство умĕнчи 1941 çулти обязательствăсене, аш-какай, сĕт-çу тата ытти те, кварталран квартала, вăхăтра тултарса пыраççĕ. Хăйсемпе пĕрле ытти çынсене те малти рете тухма пулăшаççĕ.

Анчах урăхла ĕçлекенсем те пур-ха. Районри 21 ялсовет председательĕнчен, июнĕн 5-мĕш тĕлне, 17 ялсовет председательĕ 1941 çулăн хăйсен аш-какай парас обязательствисене тултарайман. Колхоз председательĕсенчен 49 çынран 42 çын 1941 çулăн пĕр килограмм тата паман. Çавăн пекех сельпо председательĕсем, ялсовет секретарĕсем, колхоз счетоводчĕсем, бригадирсем, ферма заведующийĕсем, финагентсем, культпросвет работникĕсем хăйсен обязательствисене тултарас тĕлĕшпе районра кайра пыраççĕ.

Йăлмачча ялсовет председателĕн Николаев юлташăн 1940 çулăн 17 килограмм, 1941 çулти I—II-мĕш кварталсемшĕн 15 килограмм—пурĕ 32 килограмм аш-какай памалла. Çавăн пекех Кивĕ Шелттем ялсовет секретарĕ Сергеев 17,7 килограмм какай, колхоз председателĕ Авдеев 17,75 килограмм аш-какай, счетовод А. Сорокин 20,5 килограмм аш-какай, 58 литр сĕт парса татман. Анаткас Татмăшри «Парижская Коммуна» колхоз председателĕ Яранцев 26 килограмм какай, счетовод Ильин 1939 çулăн 110 литр сĕт халĕ те паман. Вăтакас Татмăш ялĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Иванов 42 килограмм, Çĕнĕ Аччари Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Васильев 42 килограмм халĕ те парса татман.

Районри 7 сельпо председателĕнчен пĕри те аш-какай пама тытăнман.

Канаш районĕ хальхи вăхăтра государство умĕнчи обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе республикăра кайра пырать. Ку ĕнтĕ, паллах, çак ĕçе активăçителĕклĕ таран хутшăнтарманнинчен килет. Ялсоветсем, влаçăн вырăнти органĕсем пулса тăрса, колхозниксем хушшинче массăллă ĕçе кулленех туса пымалла. Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре ялти советсен тата вĕсен активĕн ответлăхĕ пит те пысăк.

Партипе совет, комсомол тата ытти общественнăй организацисен активистсемпе куллен ĕçлес пулать. Государство умĕнчи парăмсене тӳлессинче ялти активăн малти ретре пулмалла.

Д. ВАСИЛЬЕВ.
Райуполнаркомзаг заместителĕ.

ÇĔНĔ ÇĔРТЕ

Элисенвар станцийĕ. Çĕнĕ çĕре куçса каякансен ешелонĕ çак станцине çитсе чарăнчĕ.

— Çĕнĕ çĕре çитрĕмĕр!

— Анăр, юлташсем!

— Вăрах килтĕмĕр те, час çитрĕмĕр,—терĕ пирвайхи хут çĕр пăхма тыракан Гаврилов юлташ. Вăл вагон çинчен пуринчен малтан сиксе анчĕ.

— Çитрĕмĕр!—тенĕ сасăсем пур вагонсенчен те илтĕнчĕç. Колхозниксем пĕрин хыççăн тепри ана пуçларĕç.

Чăнах та ку станци пысăк пулнă. Анчах халĕ вокзал тавраш ĕç. Унăн вырăнче кирпĕч ванчăкĕсем тата ялтăркка мрамор катăкĕсем çеç ишĕлсе выртаççĕ. Вĕсене пирĕн никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар паттăрĕсенчен тараканнисем белофинсем çĕмĕрнĕ.

Çĕмĕрĕлсе аннă вокзал çуртне çĕнĕрен тума пуçланă. Унта рабочисем ĕçлеççĕ.

— Кăçал кĕркунне вокзал çурчĕ хатĕр пулать. Рабочисем çителĕксĕр, çавăнпа кăшт тытăнса тăратпăр,—тесе пĕлтерчĕ пире станци начальникĕ.

Колхозниксем вагонсем çинчен анса пĕтрĕç. Вĕсене илме автомашинăсем, лавсем пыра пуçларĕç. Вĕсем тĕрлĕ колхозсене салана пуçларĕç.

— Халлĕхе сывă пулăр! Çитсе вырнаçсан хăнана пырăр!—тесе пĕр-пĕринпе алă тытса уйăраççĕ. Пурин те пичĕсем çинче савăнăç. Кулкаласа çеç каласаççĕ.

Акă комсомолка Иванова Нина. 19 çултискер. Пирвайхи хут çĕнĕ çĕр пăхма пынă. Вăл мĕн вагон çине ларнăранпа колхозниксем хушшинче массăллă ĕçе туса пычĕ Каласусем ирттерчĕ, кĕнекесем, хаçатсем вуласа панă.

— Нина, эсĕ хăш колхоза каяс тесе шутлатăн?—тесе ыйтрăм.

—Ара, эсĕ вĕт ку! Аван!—тесе алă панă.

— Эпĕ çав. Сирĕн колхоза тата икĕ çемье килчĕç,—тесе пĕлтерчĕ манăн юлташ.

— Аван, аван. Тата нумайрах куçарса килмеллеччĕ. Пăх-ха пирĕн çĕр мĕн чухлĕ! А ĕçлекенсем çителĕксĕр,—тесе каласа пуçларĕ сӳре сӳрелекен.

— Ну, мĕнле пурăнатăр? Çĕнĕ çĕр килĕшет-и?

— Питĕ лайăх пурăнатпăр,—терĕç колхозниксем пĕр харăсах.

Халĕ ĕнтĕ маншăн палла: кунта «За родину» колхоз вырнаçнă. Чăваш колхозĕ. Ку колхозра 110 хуçалăх пулмалла. Халĕ унта пурĕ 47 хуçалăха çитнĕ. 688 гектар çĕр, 320 гектар çаран касса панă. Колхоз пуян. Унăн çĕрĕ çинче 123 сурт, 17 выльăх вити. Витисене пурне те тенĕ пекех мрамор чулĕсенчен тунă. Водопровод, электричество пулнă. Анчах белофинсем пăрахса тарнă чухне нумайĕшне çĕмĕрсе хăварнă. Халĕ ĕнтĕ савсене çĕнĕ çĕре куçса пыракан колхозниксем юсаççĕ. Ĕç çителĕклĕ. Сапаланса ларакан хуторти суртсене пĕр çĕре пуçтарса ял тумалла. «За родину» колхоз ял тума пуçланă, 12 пӳрт куçарса пĕр çĕре лартнă. Колхоз председательĕ Васильев юлташ каласа панă тăрăх, суртсене пурне те çитес кĕркунне куçарса пĕтерсе колхоз ялĕ тумалла. Колхозниксен пурин те суртсем пур. Пӳртсене е тимĕрпе, е черепицăпа витнĕ. Тултан та, шалтан та çуллă краскăпа сăрланă. Урайĕсем çинче тĕкĕр çинчи пек сăн курăнать. Колхозниксем пурте ĕнеллĕ, 10-шар пуç сурăх, 2-шер пуç сысна усраççĕ. Сĕт-çу, аш-какай, тырпул çителĕклĕ.

Çак 14 километр хушшинче эпир «Красная Карелия», «Красный Герой», Буденный ячĕпе тăракан тата «Красный Флот» колхозсенче пултăмăр. Вĕсенче пуринче те Чăваш республикин чен куçса пынă чăвашсем пурăнаççĕ. Пур колхозсенче те пурнăç пĕр пек—пуян та культурăллă. Пĕр пырса курсан ку сĕре, вăл вара унта куçса каймасăр чăтаяс çук. Акă вăрман. Унта мĕнле кăна кайăк-кĕшĕк çук пулĕ: пăчăр, ăсан, глухарь, вăрман чăххисем т ыт. те. Ирлĕ-каçлă вĕсем çуртсен сывăхĕнчех вĕçсе сӳреççĕ. Кӳлĕсем, çырмасем, унта кĕтвĕ-кĕтвĕпе кайăк-кăвакалсем, кайăк-хурсем ишсе сӳреççĕ. Пĕр гектартан 150—200 пăтран кая мар тĕштырă туса илеççĕ. Кунта нихăш çул та уяр çанталăк пулмасть. Çавăнпа та тырă лайăх ӳсет. Вылăхчĕрлĕх усрама выран пит аван. Вылăх апачĕ çителĕклĕ. Колхозсем чугунçулран инçе мар, базар сывăх. Пĕр пăт тулă çăнăхĕ—15—20 тенкĕ, пĕр килограмм çу—20 тенкĕ, пĕр литр сĕт—50 пус тăрать. Килограмм какай—10—12 тенкĕ. Анчах базарсенче сутакансем сахал, мĕншĕн тесен илекен çук. Кашни çынăн хăйĕн çителĕклĕ.

Кашни колхозăн хăйĕн клуб. Шкулсем туса пĕтернĕ. Ачасене вĕрентеççĕ. Анчах чăвашла литература, хаçат-журналсем халлĕхе çук-ха. Куркийокинчи переселенчески отделăн чăвашсене литературăпа пулăшас тĕлĕшпе ĕçлемелле пулать.

Кашни колхозрах армансем пур. Хăма çуракан заводсем те чылай.

Районра 2 МТС ĕçлет. Колхозсен уйĕсене тракторсемпе сухалаççĕ. Кашни колхозрах сахăр кăшманĕ 10—15 гектар акнă.

Çуракине майăн 25-мĕш тĕлне пĕтерчĕç. Халĕ çĕртме сухалаççĕ. Ыраш калчисем пит аван курăнаççĕ. Халĕ колхозниксем, çуртсене хуторсенчен пĕр çĕре пуçтарса, колхоз ялĕсем тăваççĕ.

Тепĕр икĕ çултан хуторти пӳртсене пĕтĕмпех ялсене пуçтарса çитерĕç.

М. ДАНИЛОВ ЧАЛДУН.

Новосибирск облаçĕнчи Черепаново районĕнчи рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци шкулсене 1941—1942 çулти вĕренӳ çулне хатĕрленме пулăшу парас ĕçе организацилеме чĕнни çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1941 çулти июнĕн 13-мĕшĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртăвçç: Черепаново районĕнчи колхозниксен пуçарăвĕпе усă курса, Чăваш АССР Республикинчи колхозниксем иртнĕ вĕренӳ çулĕнче шкулсем валли вунтăрнин кубометр вутă хатĕрлесе панă, вунтăр та çĕршер шкул çурчĕсене юсама тата ăшăтма, шкул хуçалăхне йĕркелесе яма пулăшнă. Çак движени шкулсен благоустройствине халăх вăйĕпе лайăхлатма калама çук пысăк майсем пуррине кăтартса пачĕ, общественность тимлĕхне шкул еннелле çавăрчĕ.

1941—42 вĕренӳ çулне лайăхрах хатĕрленес шутпа Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1. Новосибирск облаçĕнчи Черепаново районĕнчи рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци 1941—42 вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре шкулсем валли пулăшу организацилесси çинчен чĕнсе каланине ырласа пурнăçа кĕртес.

2. Исполкомсен председателĕсене тата ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене шкулсене общественнăлла пулăшу парассине организацилес ĕçе ертсе пыма хушас.

3. Ялсоветсен тата колхозсен председателĕсене черепановецсем чĕнсе каланине сӳтсе-явас ĕçе организацилеме, вутă, шкулсене юсама строительнăй материалсем турттарас ĕçре, шкул çурчĕсене ăшăтас, шкул çумĕнчи хуçалăхсене йĕркелесе ярас ĕçре хăйсен шкулĕсене конкретлă пулăшу парас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас.

4. Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна шанса тăраççĕ: пирĕн республикăри рабочисем, колхозниксем тата учительсем, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, 1941—42 вĕренӳ çулĕ валли шкулсене отлично хатĕрлĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Шкулшăн пĕтĕм халăхпа тăрăшар

Новосибирск облаçĕнчи Черепаново районĕнчи рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин çырăвĕ

1940—1941 çулти вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ. Унăн итогĕсене туса, эпир çапла калама пултаратпăр: эпир вăй хурса тăрăшнипе шкула пулăшас тĕлĕшпе сахал мар ĕç тунă. Çак çырура эпир хамăрăн опыт çинчен каласа парасшăн. Эпир пĕлтĕр çулла ирттернĕ массăллă воскресниксене çĕршывра лайăх пĕлеççĕ. Рĕсене ун чухне 9 пин колхозник хутшăннă. Колхозсем 825 лаша, 21 автомашина уйăрса панă. Эпир 8.750 кубометр вутă хатĕрлерĕмĕр, ăна шкулсем тата учительсен хваттерĕсем патне турттарса патăмăр. Вутă хума 18 сарай турăмăр, 47 шкула юсарăмăр.

Шкула çапла общественнăллă пулăшу парас ĕçе пуçаракансем колхозниксем хăйсем пулчĕç. «Путь к социализму» тата «Искра социализма» колхозсенче воскресниксене пуçарса яракансем колхоз бригадирĕсем—С. Куделенко, К. Михайленко тата 70 çула çитнĕ старик Бондаренко пулчĕç. Çак колхозсенчи 235 колхозник пĕр кун хушшинче шкулсем валли пĕр çулталăк ытла хутса пурăнмаллăх вутă хатĕрлерĕç. Романовски ялсоветра çак ĕçе «Искра пятилетки» ятлă ялхуçалăх артелĕнчи комсомолецсем пуçарнă. Кунта воскреснике 306 çын хутшăннă. Вĕсем 220 кубометр вутă хатĕрленĕ, çак вутă шкула хĕлĕпех хутса ăшăтма çитнĕ.

Зимовье тата Бураново ялĕсенчи комсомолецсем колхозри тимĕрçи лаçсисенче шкул валли хуçалăх инвентарĕ: пуртăсем, кĕреçесем, витресем, алăк халăпăсем туса хатĕрленĕ.

Колхозниксем учительсемшĕн те çăвăн пекех тăрăшнă. Бочкари ялĕнчи колхозниксем Худякова учительницăн хваттерне юсаса панă; хăйсен хуçалăхĕнче ĕнесем тытса усракан учительсем валли колхозниксем утă çулмалли вырăнсем уйăрса панă, утă çулма пулăшнă.

Хĕлле пирĕн районри шкулсенче таса та ăшă пулнă. Ачасем пирĕн ĕçе тивĕçлипе хакларĕç. Вĕсем социализмлă харпăрлăха тирпейлĕн сыхласа усранă, хăйсен вĕренĕвĕпе эпир шкулшăн тăрăшнине тӳрре кăларма тăрăшнă.

Шкул валли пулăшу организацилесе, пурне те вĕрентес ĕç çине эпир уйăрмах тимлĕн пăхнă. Мĕнпур учительсемпе, вырăнти Советсемпе пĕрле Черепаново районĕнчи пĕтĕм общественность сентябрĕн 1-мĕшĕнче шкул çулне çитнĕ мĕнпур ачасене парта хушшинче лартмалла пултăр тесе кĕрешнĕ. Эпир ăна пурнăçа кĕртрĕмĕр. Вĕренекен ачасен урана тăхăнмаллисем, тумтир таврашсем çителĕклĕ пулччăр тесе тăрăшрăмăр. Шкулсенче пуринче те пекех буфетсем организацинелĕ. Комсомолецсем çитĕннĕ колхозник-активистсемпе пĕрле хăйне майлă общественнăллă контроль посчĕсем организацинелĕ, шкул ачисем пурте занятисене çӳречĕр тесе куллен-кун асăрхаса тăнă. Колхозсем ачасене инçетри шкулсене леçсе яма яланах лавсем панă. Çак ĕçсене тунипе ĕнтĕ нумай ялсоветсенче—Безменовск, Инск, Ургунск ялсоветĕсемпе ытти ялсоветсенче—пĕтĕм çулталăк тăршшинче вĕренӳве пăрахакан ачасем пулман.

Шкулсене общественнăллă пулăшу пани пирĕн район тăрăх 300 пин тенкĕ яхăн средство перекетлесе хăварма май панă. Çак средствăсемпе пăхса вĕренмелли пособисем, шкулсенчи библиотекăсем валли çĕнĕ кĕнекесем илес ĕçре усă курнă. Çак пĕтĕм ĕçсемшĕн Çутĕç Халăх Комиссарĕ В. П. Потемкин юлташ пирĕн района премилерĕ.

Çемьепе шкул хушшинчи туслăх мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине эпир ăнланса илтĕмĕр. Хальхи вăхăтра Черепаново районĕнчи общественность шкулсен материаллă пурнăçĕ лайăх пултăр тесе кăна мар, тата ачасене вĕрентес, воспитани парас ĕçĕн пахалăхĕ те лайăх пултăр тесе тăрăшать. Пирĕн районра педагогикăллă пропагандăна анлăн йĕркелесе янă. Виçĕ вăтам шкул çумĕнче çулталăкĕпех ашшĕ-амăшĕсен университечĕсем ĕçленĕ. Вĕсенче педагогикăн чи пысăк тĕ кирлĕ ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем итленĕ. Акă хăшпĕр темăсем: «Çемьери тата шкулти тĕне хирĕçле воспитани», «Ирĕк тата характер енĕпе воспитани парасси», «Ача чухнехи психологиллĕ уйăрăлăхсем», «Ĕçе юратма вĕрентсе воспитани парасси тата ĕç хăнăхăвĕсем парасси», «Ачасен общественнăллă ĕçĕ», «Ачасен вăйăсем çинчен» т. ыт. те.

Кунсăр пуçне, вăтам шкулсемпе тулламăр вăтам шкулсенче пуринче те ашшĕ-амăшĕсен лекторийĕсене организацинелĕ. Зимовье ялĕнчи туллимар вăтам шкулта ашшĕ-амăшĕсем пилĕк лекци итленĕ. Шкул директорĕ Мухоедов юлташ «Шкул ачин куна ирттермелли режимĕ», «Вĕренекен ачасен вăйăсем», «Ĕçпе воспитани парасси çинчен» темăсемпе лекцисем вуласа панă. Учительница Бочкарева юлташ «Ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнин сăлтавĕсем тата ăна хирĕç кĕрешмелли мерăсем çинчен» лекци вуласа панă. Облаçри çутĕç пайĕн инспекторĕ Попов юлташ «Çемьери коммунистла воспитани çинчен» лекци вуланă. Учительсем колхозниксен семьисенче организацинленĕ педагогикăллă пропаганда нумай усă кӳнĕ. Çак ĕçре Дорогино-Заимск шкулĕнчи учительсем уйăрмах пысăк çитĕнӳсем тунă.

Ашшĕ-амăшсен комитечĕсем пысăк ĕç туса пыраççĕ. Вĕсем пурне те вĕрентес ĕç шурнăçа мĕнле кĕрсе пынине асăрхаççĕ, шкул çуртĕнче, буфетра, вешалка патĕнче йĕркелĕх туса хурас ĕçре учительсене пулăшу парас шутпа шкулта дежурствăсем ирттереççĕ. Пирĕн патра ашшĕ-амăшсен районри конференцийĕсем те пухăнаççĕ. Пĕрремĕш конференци февралĕн 16-мĕшĕнче пулнă. Çав кун вăйлă çил-тăман пулнă пулсан та, конференцине чи инçетри ялсенчи колхозсенчен 170 делегат пухăннă. Шкулсенчи мĕнпур ĕçсем çинчен колхозниксем чи тăван та çывăх ĕç çинчен калани пек каласа панă. Вĕсем шкулсен выставкинче пулнă, вĕренекен ачасен çырнă тетрачĕсемпе паллашнă, шкул ачисем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ тĕлне хатĕрленĕ парнесене пăхса сӳренĕ, педагогика ыйтăвĕ тăрăх лекци итленĕ.

Ашшĕ-амăшсен конференцинче Черепаново общественноçĕн представителĕсен мĕн çинчен каласа памаллисем нумай пулнă. Ачасем вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пымалла тăвас тесе, районра учительсем кăна мар, шкул кăна мар, тата ашшĕ-амăшсем те кĕрешнĕ. Ачасене килте тума панă заданисене эпир ачасен тĕп ĕçĕ тесе хаклани, çак ĕç çине ачасем тӳрĕ кăмăлпа пăхчăр тесе, мĕнпур мерăсене йышăннă.

Пирĕн районри организацисем тата ачасен ашшĕ-амăшсем учительсене мĕн тери пысăк пулăшу пани çинчен çакăн пек факт та лайăх каласа парать: партин районри комитечĕ пуçарнипе тата вăл ертсе пынипе ачасем вырăс чĕлхине тата математикăна вĕреннĕ чух çырнă тетрадьсене пăхса тухма виçĕ хутчен общественнăллă смотр туса ирттернĕ.

Пирĕнтен нумайăшĕ тĕрлĕ ĕçсен профессийĕсене лайăх пĕлеççĕ, эпир хамăрăн пĕлӳлĕхе тата ĕçри хăнăхусене ачасене пама тăрăшатпăр. Педагогсем ертсе пынипе, вĕсем асăрхаса тăнипе колхозниксем, трактористсен, шоферсен шкулсенчи кружокĕсенче, ялхуçалăх инвентарьне вĕренмелли кружокĕсенче, электротехника кружокĕсенче, çамрăк натуралистсен кружокĕсенче занятисем ирттернĕ.

Посевнинскри вăтам шкул çумĕнчи трактористсен кружокне икĕ çул хушши ĕнтĕ вĕренӳ комбайначĕн механикĕ Сура юлташ, шоферсен кружокне реммашзавод инженерĕ Гищенко юлташ ертсе пыраççĕ. Аслăрах классенче вĕренекен ачасем трактора лайăх вĕренчĕç, халĕ çуллахи вăхăтра колхоз хирĕсенче хăйсем тĕллĕн ĕçлеме те пултараççĕ. Зимовье ялĕнчи колхозник пултаракан механик Можный юлташ шкул ачисене вăрлăх сорчĕсене сăнас тĕлĕшпе ĕçлеме, çĕре культурăллă ĕçлесе çемçетме вĕрентрĕ. Районри палăк пчеловод Рубис юлташ Ургунск шкулĕнчи çамрăк пчеловодсен кружокне ертсе пырать. Карасевскри МТС агрономĕ Лещук юлташ ачасене сад тата пахча ĕçне юратма вĕрентет. Колхозницăсем — Кулешева, Ильина, Депешина юлташсем ачасене тĕрĕсем тума, шăтăкласем çыхма вĕрентрĕç, вĕсем çак ĕç енĕпе пысăк мастерсем пулса тăраççĕ. Врач Носырев юлташ тата аптека заведующийĕ Родовский юлташ шкулсенчи медицина сестрисен кружокĕсене ертсе пыраççĕ. Амбулатори фельдшерĕ Смоленская юлташ тата фельдшер Цветков юлташ ГСО значкисчĕсене 50—60 çын вĕрентсе хатĕрлерĕç.

Шкула, учительсене пулăшу панă мĕнпур сынсене çак çырура пурне те илсе кăтартма май çук. Хамăрăн чи лайăх общественниксене эпир ашшĕ-амăшсен районри иккĕмĕш конференцийĕнче палăртăватпăр.

Пирĕн районри общественноçăн пуçарăвĕ мĕнпур çĕршыв тăрăх анлăн сарăлса кайрĕ. Черепановецсен движенийĕ массăллă движени пулса тăчĕ. Унăн çитĕнĕвĕсем çинчен çĕршыври чи тĕрлĕ районсенчен, облаççенчен тата республикăсенчен пĕлтереççĕ. Анчах та эпир халиччен тунă ĕçе ĕçĕн пуçламăшĕ вырăнне кăна шутлатпăр. Шкула пур енчен те пулăшу парас ĕçе малалла туса пымалла, ăна çулран çул сарса пымалла, ашшĕ-амăшсен общественноçĕпе шкул хушшинчи сыхăнăва çирĕплетсе пымалла.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илеттĕр:

Шкулсене юсас тата çĕнĕ шкулсем тăвас ĕçе вăхăтра туса пĕтермелле. Çак ĕçре шкулсене ĕç вăйĕ, стройматериалсем, транспорт парса пулăшмалла.

Июлĕн 1-мĕш тĕлне районри шкулсем валли çулталăк хушши хутса пурăнмаллăх вутă хатĕрлемелле.

Шкулсенчи стандартлă мар оборудованине — партăсене, класнăй досках не, пукансене, сĕтелсене—стандартлă оборудованипе улăштарас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçламалла. Çуллахи вăхăт хушшинче çĕнĕрен 1000 парта, çĕнĕ класнăй досксем 200, классен пӳлĕмĕсем валли 175 сĕтел тата 175 пукан тумалла.

Вĕренме тивĕçлĕ ачасене учета илес тата районри шкулсене кирлĕ чухлĕ вĕренекенсем илес ĕçе правительство çирĕплетсе панă сроксенче организованно туса ирттермелле.

Хĕллехи вăхăтра инçетри колхозсенчи ачасене шкула лавпа леçсе ямалла тата учительсемпе пĕрле, вĕренӳ çулĕ хушшинче вĕренме пăрахакан ачасем пачах та пулмалла мар тăвас тесе, мĕнпур мерăсене йышăнмалла.

Çуллахи вăхăтра эпир туллимар вăтам шкулсем çумĕнче пуринче те спорт площадкисем тăватпăр, вăтам шкулсем çумĕнче вара—физкультура городокĕсем тăватпăр.

Çуллахи вăхăт хушшинче пĕрмаях педагогикăллă пропагандăна малалла сарса пыратпăр. Çуллахи уйăхсенче шкулсемпе пĕрле ачасен ĕçĕпе канăвне организацилетпĕр.

Комсомолец-колхозниксем хăйсен вăйăсемпе шкулсем валли шкул çумĕнчи участоксенче ĕçлеме хуçалăх инвентарĕсем туса пама, ялхуçалăх ĕçĕн хăнăхăвĕсене алла илес ĕçре вĕренекенсене пулăшу пама пуласçĕ.

Çак ĕç пирĕн пĕтĕм район тăрăх сарăлса кайрĕ те ĕнтĕ, эпир хамăрăн обязательствăсене пурнăçа кĕртетпĕрех.

Эпир совет общественноçне çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнма, шкулшăн пĕтĕм халăхпа тăрăшассине пур майсемпе те çирĕплетсе тата сарса пыма чĕнетпĕр.

Пирĕн парти, пирĕн правительство, пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ ачасемшĕн атте пек, калама çук нумай тăрăшаççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулне пĕтĕмĕшпех хатĕрленес ĕçре, çĕнĕ вĕренӳ çулне пирĕн совет шкулĕн çĕнĕ мухтавлă çитĕнĕвĕсем çулталăкĕ туса хурас ĕçре учителе пулăшу парасси—ашшĕ-амăшсен, хуларипе ялти мĕнпур совет общественноçĕн обязанноçĕ пулса тăрать.

Çырăва Черепаново районĕнчи ĕççыннисен питех те нумай пухăвĕсенче сӳтсе-явнă. Пухусем хушнипе çыру çине çаксем алă пуснă:

Ф. Громов — ВКП(б) Черепаново райкомĕн секретарĕ, **Г. Грищук** — ĕççыннин депутачĕсен районри Совет исполкомĕн председателĕ, **В. Нестеренко** — «2-я пятилетка» колхозри уйăх бригадин бригадирĕ, **Шмелев** — «Сталинский путь» колхозăн парторгĕ, ашшĕ-амăшсен шкулти комитечĕн председателĕ, **И. Тучков** — «2-я пятилетка» колхозри конюх, **М. Еремеев** — «2-я пятилетка» колхоз председателĕ, **Кузеванова** — доярка, Ургунск ялсовечĕн депутачĕ, **Адов** — комбайнер, **Кузнецова** — «9-ое января» колхозри звеньевой, **С. Уваров** — Верх-Мильтушск ялисполкомĕн председателĕ, **Е. Гуляев**—«Завет Ильича» колхозри зоотехник, **А. Власов** — Огнево-Заимск ялисполкомĕн председателĕ, **П. Волков** — МТС-ри молотобоец, **И. Захарин** — «Красный май» колхозри тракторист, **Комаров** — тĕштырă совхозĕн директорĕ, **Шунько** — Черепаново станцинчи депо начальникĕ, **И. Чуркин** — вагоннăй мастер, **Лукьянова** — кайăк-кĕшĕк комбинатĕнчи работница, **Гречишкин** — ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ, **Васильев** — горисполком председателĕ, **Ильин** — агроном, **С. Пачин** — 1-мĕш номерлĕ молсовхоз директорĕ, **Т. Саковская** — врач, **Б. Пронаев** — учитель тата ытти çынсем (пĕтĕмпе 2.310 çын алă пуснă).

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем йĕркеллĕ вĕçленеççĕ

Тĕрер ялсоветĕнчи (Красноармейски р.) туллямар вăтам шкулта пĕлӳ тĕрĕслевĕсем ăнăçлăн вĕçленсе пыраççĕ. Шкулта кăçалхи вĕренӳ çулĕнче 232 ача вĕреннĕ. Шкул дирекцийĕ тата учительсен коллективĕ испытанисене ирттерме тивĕçлипе хатĕрленнĕ. Чи малтанах испытанисем ирттерме план тунă. Пĕр класран тепĕр класа куçарас тата вĕрентсе кăларас тĕлĕшпе пулакан испытанисене Наркомпрос инструкцийĕ тăрăх туса пыраççĕ.

Кăçалхи испытанисем шкулта вĕренӳ паталăкĕ чылай лайăхланса пынине кăтартса параççĕ. 7-мĕш класра 23 ачаран вырăс чĕлхипе 11 ача «отлично», 2 ача «хорошо», 10 ача «посредственно» паллăсем илнĕ. Чăваш чĕлхи тăрăх çырассипе 23 ачаран 15 ача «отлично», 2 ача «хорошо», 3 ача «посредственно» паллăсем илнĕ. А. Ефимов, С. Иванова, Владимиров вĕренекенсем чăваш чĕлхипе диктантсем çырнă чухне пĕр йăнăш та туман.

Географипе тата Сталинла Конституцине çамрăксем тăрăшса вĕренсе пыраççĕ. 6-мĕш «А» тата 6-мĕш «Б» классенче вĕренекен пур ачасем те çав предметсем тăрăх «отлично» тата «хорошо» паллăсем илнĕ.

Чылай ачасем пур предметсемпе те отлично вĕренсе пыраççĕ. 7-мĕш класра вĕренекенсем А. Ефимов, А. Владимиров, С. Нижитин, Филиппов çамрăксем пур предметсем тăрăх та çулталăкĕпех отлично вĕренсе пынă, «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухнă. Вĕсем дисциплинăллă, общественнăллă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Л. КОНСТАНТИНОВ.

Ял илемлĕхĕшĕн тăрăшмаççĕ

Патăръел — Шăмăршă çулĕпе аслă вăрман витĕр тухсан Карла шывĕ тăрăх Шăмăршă ялĕ сарăлса выртать. Шăмăршă — район центрĕ. Илемлĕ вырăнта ларать. Чăваш республикин чи кăнтăр енчи, Тутар республикипе тата Куйбышев облаçĕпе чикĕре вырнаçнă район. Çурçĕр енчен килекен хăмăр та сивĕ çилсенчен вăрман сыхласа тăрать Шăмăршă ялне.

Çулленех ӳсет, чечекленет район центрĕ. Вăтам шкул, клуб, çу завочĕ, промкомбинат, çĕвĕ çĕлекен артель, МТС т. ыт. те район центрĕ малалла тата ӳсесси çинчен калаççĕ. Кăçал район центрне лайăхлатма, симĕслетме 25.000 тенкĕ пăхнă. Вăл укçа-тенкĕпе туллин усă курас пулсан, халех ĕçе тытăнмалла. Кăçал 400 метр тротуар сарма, 1000 тĕп йывăç лартма пăхнă. Анчах та ялсовечĕ халĕ те ĕçе тытăнман.

— Сирĕн район центрĕ аван, илемлĕ, çуртсем пурте пекех пятистенныйĕ, анчах та йывăç, садпахчи таврашĕ çук, — теççĕ шăмăршăсене Шупашкартан е ытти çĕртен килекен хăнасем. Çапла çав, район центрĕ ытла та çара, сайра-хутра çеç йывăç курма пулать.

Акă, ВКП(б) райкомĕн картишне, ĕççыннин депутачĕсен районри Совет исполкомĕн çурчĕ тавра йывăç лартма, сад ĕрчетме май пур, çавăн пекех ытти учрежденисемпе организацисен те карта тытса йывăç ĕрчетме пулать. Анчах та ĕçе тытăнмаççĕ. Патăръелĕнчи питомник темĕн чухлĕ йывăç ӳстерет. Апла пулин те, район центрĕнче те, колхозсенче те сад ĕрчетмеççĕ.

Андреевка, Кивĕ Шăмăршă, Çĕнĕ Шăмăршă, Васан, Ярслав т. ыт. ялсем те çапçара курăнаççĕ. Ку ялсенче, 3—4 йăмра е 3—4 хуçалăх сачĕсĕр (садра 10—16 йывăç çеç) пуçне, урăх сад таврашĕ çук. Куракссене ларса йăва çавăрмалăх та йывăç ӳстерейместьĕ кунти колхозсем. Райĕсĕç пайĕ сад ĕрчетме панă плана колхозсем пурнăçламаççĕ. Çавна пула вара Шăмăршă базарĕнче панулми кураймастăн. Сайра-хутра Ульяновскран е Вăрнартан илсе килсе çеç суткаласçĕ.

Чулла, шуртăмла, хăйăрла е ишĕлсе анакан тискер çырмасем çук Шăмăршă районĕнче. Тӳрем çĕр, тарăн мар çырмасем, шывлă, улăхла тӳлек вырăнсем—акă мĕнпе палăрса тăрать пирĕн район. Выльăх усрамалли, кĕтӳ çӳретмелли, сад ĕрчетмелли илемлĕ те пуян вырăнсем кунта. Шăмăршă районĕнчи колхозниксен Вăрнар, Калинински, Элĕк т. ыт. районсенчен сад ĕрчетме вĕренмелле.

Д. ОБОФОРОВ

Ĕççыннисем çуллахи канăвĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: канмалли кун Шупашкарти ĕççыннисем паромпа Атăл леш ъенне каçса калаççĕ.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Колхозсен финанс хуçалăхне тĕпренех лайăхлатмалла

Республикăри нумай колхозсенче финанс хуçалăхне кирлĕ пек йĕркелесе пымаççĕ, финанс дисциплинине пăснисем те сахал мар тĕл пулаççĕ. Çакна палăртмалла: хуçалăхлă, суту-илӳ, кооперативлă, заготовка тата ытти организацисенчен хăшпĕрисем колхозсем хăйсене пулăшса усă панăшăн темиçе çул хушши расчет тумасăр тăраççĕ. Колхозсен тĕрлĕрен организацисенчен илмелли укçа-тенкĕ 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне миллионшар тенкĕ пулнă. Çав шутран пĕр подотчетлă çынсенне кăна вăл парăм 523,4 пин тенке, заготовка организацисенче—773,9 пин тенке çитнĕ. Республикăри ытти организацисен парăмĕсем те пысăк. Тĕслĕхрен акă, Етĕрнери çу тата олиф туса кăларакан заводăн хăйне пулăпакан колхозсене тӳлемелли парăм 257 пин тенке çитет.

Уйăрăм районсене илсе пăхăпăр. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсене тĕрлĕ организацисем тӳлемелли парăм 381,8 пин тенке çитет. Çакнашкал парăмсене Пăрачкав районĕнчи колхозсем 434,7 пин тенкĕ, Шупашкар районĕнчи колхозсем 560,8 пин тенкĕ шыраса илмелле.

Колхоз правленийĕсем организацисенчен укçа-тенкĕ шыраса илес тĕлĕшпе сахал тăрăшаççĕ, хăйсем те колхоз укçи-тенкинне час-часах законсăр салатаççĕ.

Парăма вăхăтра шыраса илменнине пула, колхозсем пайланман фонд валли уйăрнă укçана ялхуçалăх банкне тĕрĕс-тĕкел хывса çитереймеççĕ. Сăмахран, Ишлей районĕнчи «Красный плуг» колхоз пайланман фонда 4100 тенкĕ хывса çитереймен, мĕншĕн тесен вăл учрежденисемпе организацисенчен 3100 тенкĕ, колхозниксенчен 1000 тенкĕ шыраса илмесĕр хăварнă.

Колхоз правленийĕсенчен чылайăшĕсем ялхуçалăх артель уставĕн 12-мĕш статьине пăсаççĕ. Вĕсем укçа-тенкĕне Госбанкăн текущий счечĕ çине куçармасăр, хăйсен кассисем урлă расходлаççĕ. Пирĕн республикăри колхозсен 1940 çулти пĕтĕм тупăшĕ 78165,5 пин тенкĕ пулнă. Çав шутран Госбанк текущий счечĕ çине мĕнпурĕ те 48425,9 пин тенкĕ (62 процент) çеç кĕнĕ. Колхоз суту-илĕвĕнчен илнĕ тупăшран—37297,1 пин тенкĕрен—банк кассине пĕтĕмпе те 18141 пин тенкĕ (35,2 процент) кăна хывнă. Уйăрăм колхозсем 1940 çулта банка пĕр пус та хуман (Красноармейски районри «Большевик» колхоз).

Сметăна пĕр пăсмасăр пурнăçласа пырас ыйту çине колхоз правленисем пит çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Чкаловски районри «Путь Ленина» колхоз 1940 çулта тĕрлĕрен расходсем валли сметăпа 2 пин тенкĕ пăхнă пулнă. Чăннипе вара, 64 пин тенкĕ расходлана. Çак расхода колхоз правленийĕ колхозниксен пухăвĕнче ыйтмасăрах тунă. Шупашкар районĕнчи «Красная заря» колхозра «производствăллă тĕрлĕ расходсем» статья тăрăх 9 пин тенкĕ ытлашши расходлана.

Колхозсенче укçа-тенкĕне çаратнине тата укçа тухманнине кирĕç кĕрешесси те çителĕксĕр пулса пырать. Пĕр 1940 çулпăн кăна колхозсен укçа-тенкине çаратса тата растрата туса çĕршĕр пин тенкĕ пĕтернĕ.

Хуçалăхлă, суту-илӳ, кооперативлă, заготовка тата ытти организацисем колхозсемпе вăхăтра расчет тумаллине, укçана законсăр салатса пĕтернине, укçа-тенкĕне банк урлă расходламанни колхозсене хуçалăхпа организаци тĕлĕшĕнчен çирĕплетсе пыма партипе правительство панă директивăсене пăсни пулать. Çакă вăл тата партипе советăн районри организацисем колхозсенчи финанс ĕçне çителĕксĕр контроллесе тăни çинчен калать.

Колхозсенчи финанс хуçалăхне лайăх йĕркелес тĕлĕшпе чылай колхозсенчи ревизи комиссисем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Укçа-тенкĕне вырăнсăр салатса пĕтернĕшĕн ревизи комиссисен председателĕсем колхоз председателĕсемпе танах ответ тытма тивĕç. Анчах ревизи ĕçне лайăхлатма колхозсене Наркомзем та, Госбанк та, ялхуçалăх банкĕ те чăтма çук начар пулăшаççĕ, отчетна учет ĕçне йĕркелесе яма счетоводсене практикăллă пулăшу памаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ совет, хуçалăхлă, заготовка организацисен колхозсене тавăрса памалли парăмсем çинчен пăхса тухрĕ. ЧАССР Совнаркомĕ организацисен руководителĕсене вăл парăмсене 1941 çулти июлĕн 10-мĕшĕнчен кая çолмасăр тавăрса пама тата укçа-тенкĕне вăхăтра тӳлемесĕр тăнине пĕтерме хушса хăварчĕ.

Совнарком, çăвăн пекех, колхоз председателĕсене колхозниксемпе подотчетлăй çынсенчен илмелли укçана та 1941 çулти июлĕн 10-мĕшĕнчен пыраса илме хушрĕ.

Дебиторла парăмсене пĕтерес ĕçре колхозсене райĕсĕç пайĕсен инструторĕсемпе бухгалтерĕсем, государство тата ялхуçалăх банкĕн инспекторĕсем пысăк пулăшу пама тивĕç. Вĕсен укçа-тенкĕне шыраса илме суда памалли заявленисене йĕркелеме пулăшмалла. Судпа прокуратура органĕнĕсен ун пек ĕçсене кĕске вăхăтра пăхса тухассиншĕн тăрăшмалла.

Колхозсенчи финанс хуçалăхне лайăхлатассишĕн парти, совет, çĕрĕç тата финанс органĕнĕсен тимлĕн ĕçлес пулать. Колхозри финанс хуçалăхĕ—вĕсен кулленхи ĕçĕ пулмалла.

И. МАТРОСОВ.
ЧАССР Совнаркомĕн ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен ответлă исполнителĕ.

14 колхоз çăмарта парса татнă

ИШЛЕЙ. ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăна обязательнăй йĕркепе çăмарта парасси çинчен» йышăннă постановлени тухнă хыççăн колхозсем, колхозниксем тата единоличниксем государствăна çăмарта памалли обязательствăна пурнăçлама тытăнчĕç.

Чылай колхозсем обязательствăна пурнăçларĕç те ĕнтĕ. «Большевик», «Клевер», «Самолет» тата ытти колхозсем те кăçалхи çулшăн çăмарта парса татрĕç.

Июнĕн 1-мĕш тĕлне районĕпе 14 колхоз государствăна çăмарта парса татнă. Государствăна çăмарта парас тĕлĕшпе Сыбайкасси, Кибечкасси, Чурачăк, Вăрман-Сӳктер ялсовечĕсем аван ĕçлеççĕ.

Е. ТЮРИН.

Шкула пулăшасси—совет общественноçĕн пархатарлă ĕçĕ

Иртнĕ çулта, 1940—41 вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май, Новосибирск облаçĕнчи Черепаново районĕнчи колхозниксем, вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре шкулсене пысăк пулăшу парса, çавăн пекех шкулсене пулăшу пама мĕнпур ĕççыннисене чĕнчĕç. Черепаново районĕнчи колхозниксен пуçарăвĕпе шкулсене пулăшу парасси тĕлĕшпе пирĕн республикăри ĕççыннисем те палăр ĕçсем туса ирттерчĕç.

Шкула тӳлевсĕрех пулăшас ĕçе пирĕн республикăра пуçласа Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозниксем хутшăнчĕç. Сентябрĕн 22-мĕшĕнче тата октябрĕн 27-мĕшĕнче вĕсем шкулсене хăйсем хатĕрленсе çитме пулăшас майпа шкулсем валли 1380 кубометр вутă турттарса пачĕç, шкул çурчĕсене ăшă тытмалла тăвас тĕлĕшпе ĕçлерĕç.

Черепаново районĕнчи колхозниксен паха пуçарăвне республикăри ытти районсенчи колхозниксем те пур çĕрте те пекех халăлласа йышăнчĕç. Сентябрĕн 20-мĕшĕнче шкулсем валли 1280 кубометр вутă турттарса кăларнă, 150 класс пӳлĕмĕсене ăшă тытмалла тунă, шкулсен çĕр участокĕсене карта тытас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ.

Элĕк районĕнчи колхозниксем, шкула пулăшмалли кун ирттерсе, шкул валли 937 кубометр вутă турттарса кăларнă, шкулсенчи партăсене юсанă, камакасене шуратса панă. Элĕк районĕнчи Чăваш Сурм ялĕнчи ĕççыннисем çав кун шкула 57 кубометр вутă турттарса панă, шкул тавра карта тытса çаврăннă.

Канаш районĕнчи колхозниксем шкулсене хĕле хатĕрлес майпа 1500 кубометр вутă турттарса кăларнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкасси колхозникĕсем шкул валли пилĕк класлăх çурт туса панă.

Шкула пулăшас тĕлĕшпе иртнĕ çулта туса ирттернĕ паха ĕçсен тĕслĕхĕсем республикăра тата тата нумай. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май кашни районрах ĕççыннисем çĕнĕ шкул çурчĕсем тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Первомайски районри колхозниксем кăçал çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă çĕре шкулсем валли çĕнĕрен 5 çурт лартаççĕ. Липовка ялĕнчи ĕçсыннисем туллимар вăтам шкул валли тăватă класлăх çĕнĕ çурт тума тытăннă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Паникасси-ри колхоз шкул валли виçĕ класлăх çурт лартать.

Чылай ялсенче колхозсем шкул çурчĕсене юсас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Шкул ĕçĕ халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсен ĕçĕ кăна мар, пĕтĕм совет общественноçĕн ĕçĕ, социализм строительствин палăлă участокĕ пулса тăнине ĕççыннисен тĕп масси лайăх пĕлсе тăрать. Черепаново районĕнчи колхозниксен пуçарăвĕпе пуçланса кайнă ĕç — шкула пулăшас ĕç иртнĕ çулта республикăри шкулсене пиннер кубометр вутă, вунтăрнăн çĕнĕ шкул çурчĕсем пачĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре те республикăри колхозсем, колхозниксем, мĕнпур ĕççыннисем шкулсене пысăк пулăшу парасса шанмалла.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне тивĕçлипе хатĕрленес ситме пулăшса, шкулсене вĕренӳ çулĕ тăршшипех ăнăçлă ĕçлеме мĕнпур кирлĕ условисене туса парар.

А. ОТАЧКИН.

Суллахи вăхăтра Атăл тата йăлăм улăхĕ—Шупашкарти ĕççыннисен чи юратнă вырăнĕ шутланса тăраççĕ. Канмалли кунсенче пĕтĕм хула тенĕ пек Атăл лешъенне куçать... УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: иртнĕ вырсарникун Атăл лешъенче.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

ЕВРОПĂРИ, АФРИКĂРИ ТАТА АЗИРИ ВĂРÇĂ

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Англипе Германи хушшинчи фронтра авиаци ахтивлăхĕ палăрать. Ыран июнĕн 13-мĕш тенĕ чух çĕрле, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германин çăмăл бомбардировщикĕсем Кăнтăр тата Центральнăй Англири темиçе аэродром çине бомбăсем пырса пăрахнă. Св. Георг проливĕнче Германи самолечĕсем Англин суту-илӳ тумалли 4 суднине путарнă тата тепĕр 4 пароходне çиен кӳнĕ.

Июнĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи бомбардировщикĕсен соединенийĕ Ла-Манш проливĕнче Германи суднисем çине пырса тапăннă. Ыран июнĕн 13-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн пысăк соединенийĕ Рур облаçĕнчи промышленноçлă объектсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи самолечĕсем çавăн пекех тата Брестпа Антверпенри доксем çине, Роттердам сывăхĕнчи хăшпĕр объектсем çине пырса тапăннă.

* * *

Юлашки кунсем хушшинче **Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнчи** вăрçă ĕçĕсем чылаях вăйланнă. Июнĕн 12-мĕшĕнче ирхине, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Итали самолечĕсен пысăк соединенийĕ Мальта утравĕ çине пырса тапăннă. Утрав тĕлĕнчи сывлăшра хаяр çапăçу пуçланнă, çак çапăçура Италин 10 самолетне персе антарнă.

Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Итали истребителĕсем Англин 8 самолетне персе антарнă, итальянецсен 2 истребитель пĕтнĕ. Англи командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, Англи авиацийĕ Родос утравĕ çине татах тепĕр хут пырса тапăннă. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Ла-Линеа-ран (Испани) пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 12-мĕшĕнче ирхине темĕнле çĕршыв самолечĕсен эскадрильи Гибралтар хрепоçĕ çине 5 бомба пырса пăрахнă.

Зенитнăй артиллерирен персе, самолетсене хăваласа янă. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Алхесирасран пĕлтернĕ тăрăх, Гибралтарти зенитнăй артиллери темĕнле çĕршывăн самолечĕ çине персе тăнă. Çав самолет Гибралтар тĕлне виçĕ хут вĕçсе пынă. Вăл Франци самолечĕ пулнă, тесе шутлаççĕ.

Сурçĕр Африкăра, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, нимĕнле пысăк операцисем те пулман. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Тобрук патĕнчи фронтра икĕ енĕн артиллерийĕ те активлăн персе тăни палăрать. Итали бомбардировщикĕсем, тенĕ малалла сводкăра, англичансен Тобрукри позицийĕсем, зенитнăй батарейăсемпе лагерьсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англи самолечĕсем Бенгази çине пырса тапăннă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Абиссинире, ытларах активлă çапăçусем, халиччен-хи пекех, Галла-Сидамо облаçĕнче сарăлса пыраççĕ. Англи командованийĕ кăларнă коммюникере каланă тăрăх, партизансен отрячĕсем Аддис-Абеба патĕнчен хĕвеланăç еннелле 270 километрта вырнаçса тăракан Лекенти хулине туртса илнĕ. Абиссинири фронтри лару-тăру пирки Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ çапла çырать: Лекенти хули Аддис-Абебăран хĕвеланăç еннелле каякан тĕп çул çинче вырнаçса тăрать; Джиммăна хупăрласа илес ĕçре Лекенти пысăк ыйăн йыпăнса тăрать. Джимма районĕнче итальянецсем чылаях нумай войскăсем тата продовольствин пухнă. Англичансем, тет корреспондент, Джиммăри итальянецсене хупăрласа пыраççĕ. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Гондар районĕнче çапăçусем пыраççĕ.

* * *

Сирири фронтăн участокĕсенче пуринче те активлă çапăçусем пыраççĕ. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: фронтăн кăнтăр енчи участокĕнче де Голль генералăн чаçĕсем халăхи вăхăтра Кисвене (Дамаск патĕнчен кăнтăр еннелле 10 миляра) хупăрласа пыраççĕ. Çак пунктра Франци войскисем хирĕç тăма пăрахман-ха. Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисемпе де Голль войскисем çавăн пекех Дамаска та хупăрласа илнĕ пулмалла. Юнайтед пресс агентствин Каирти корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: хальхи вăхăтра Дамаска англичансене парасси çинчен калаçусем пыраççĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем Мерджайун патĕнчен çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле малалла кайнă, Хасбей пунктне çитнĕ, çыран хĕррипе наступлени туса пыракан англичансемпе де Голль генералăн чаçĕсем Сайда патĕнчен кăнтăр енче кĕрешеççĕ. (Сайда—Бейрут патĕнчен кăнтăр еннелле 35 километрта вырнаçса тăракан пункт). Юнайтед пресс агентствин Виширри корреспонденчĕ, Бейрутран илнĕ сведенисем тăрăх, çапла пĕлтерет: Франци войскисем Сайдăна, Хасбея тата Кисвене хăйсен аллинчен вĕçертмен-ха. Сайда патĕнчен кăнтăр еннелле 10 километрта, çавăн пекех Хасбейпа Кисве районĕсенче Франци войскисем Англи войскисен атакисене сирсе янă. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: артиллерипе пулеметсенчен вăйлăн персе тăнă хыççăн, Англи войскисем çĕнĕ позицисене турта илнĕ. Çав позицисем Ливан территорийĕ çине тата Иордан юханшывĕн айлăмне шалалла кĕрсе кайма çул уçса параççĕ.

Хĕвелтухăç Сирире Иракран наступлени туса пыракан англичансен мотомеханизированнăй икĕ колонни Эль-Хасейха ятлă паха пункта туртса илнĕ. Çак пункт Иракпа Сири чикки патĕнчен 55 километрта, Хĕвелтухăç Сирири караван çулĕсем çинче вырнаçса тăрать. Çакăнтан англичансем Алеппо çинелле наступлени пуçлама хатĕрленеççĕ.

Германи авиацийĕ, тенĕ Германи сводкинче, Хайфа çине (Палестинăра) пырса тапăннă.

Июнĕн 13-мĕш. (ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

(Июнĕн 6-мĕшпе 13-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Юлашки вăхăтра Китайăн çурçĕр пайĕнчи Суйюань провинцийĕнче нумай вăхăт хушши лăпкă тăнă хыççăн, вăрçă ĕçĕсем вăйланни палăрать. Вăрçă ĕçĕсем Суйюань провинцийĕн центральнăй пайĕнчи пушхирлĕ тата çеçенхирлĕ районсенче сарăлса пыраççĕ. Çак обстоятельство Япони командованине моторизованнăй тата бронетанковăй чаçсемпе усă курма май парать.

Китай войскисем Баотоу хули патĕнчен хĕвеланăç енчи районра кĕрешеççĕ (Баотоу хули — Бэйпин — Суйюань чугунçулĕн вĕçĕнчи пункт, Суйюань провинцийĕн суту-илӳ тумалли порчĕ). Çак хула Суйюань провинцийĕнчи операцисенче Япони войскисен опорлă пункчĕ пулса тăрать. Анчах та, ăна японецсем оккупациленĕ хыççăн, вĕсем хула патĕнчен мĕн чухлĕ те пулин малалла кайма пултарайман. Хальхи вăхăтра çак районра японецсен пысăк вăйсем çук пулмалла. Çакăнпа усă курса, Китай чаçĕсем Аньбэй çинелле наступлени тума пуçланă, Уланшань тăвĕсем патĕнчен çурçĕр енчи районра Япони войскисенĕ хупăрласа илме тăрăшаççĕ. Китай войскисен колонни Аньбэй патнех сывхарса çитнĕ. Китайăн ытти чаçĕсем Аньбэйпе Баотоу хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх тата чугунçул тăрăх çапăçусем сарса пыраççĕ, японецсене подкрепленисемпе боеприпассем илсе пыма чăмантараççĕ. Хуанхэ юханшывĕн кăнтăр çыранĕ çинчен Баотоу районне Китай подкрепленийĕсене илсе пыраççĕ.

Шаньси провинцийĕнче, Хэнаньпровинцийĕн çурçĕр пайĕнче юлашки кунсенче çапăçусем пуринчен ытларах чугунçулсемпе шоссе çулĕсем тăрăх сарăлса пынă. Гаопин — Чжанцзы районĕнче (Шаньси провинцийĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче) пысăк çапăçусем пыраççĕ. Чугунçулсене, кĕпersене тата ытти сооруженисене çĕмĕре-çĕмĕре тăкса, Китай войскисем японецсем умне питех те пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратаççĕ. Майăн 31-мĕшĕнче Бэйпин — Ханькоу чугунçулĕ çинчи, Аньянпа Шанин районĕнчи, пысăк кĕперсене çĕмĕрсе тăкнă. Иртнĕ эрне хушшинче çавăн пекех Шаньдун провинцийĕнче те çапăçусем пынă. Ишань тăвĕсем çинче çапăçакан китаецсен чаçĕсем Циндао—Цзинань чугунçулĕ çине пĕр хут çеç мар пырса тапăннă.

Юлашки вăхăтра Хубэй провинцийĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи (Центральнăй Китайра) Кантон — Ханькоу чугунçулĕнчен хĕвелтухăç енче пысăк çапăçусем пуçланасса кĕтнĕ. Япони командованийĕ çак района резервсем илсе пыма пуçланă, анчах кайран вĕсене илсе пыма чарăннă, çавăнпа та операцисем анлăн сарăлса каймаç. Иочжоуна Туншань хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх тата Хубэй провинцийĕн хăшпĕр районĕсенче кăна разведкăлă çапăçусем пынă.

Июнĕн 13-мĕш. (ТАСС).

Паян профсоюзпа комсомолăн кросĕ пуçланать

Пирĕн çĕршывра массăллă физкультура çулран çулах анлăн сарăлса пырать. Паян пуçланажан кросс ĕççыннисене физкультура ĕçне татах та йышлăн явăçтарма пулăшмалла. Мĕншĕн тесен, çăмăл атлетика çамрăксен чи юратнă спорчĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Профсоюзпа комсомол кросĕн тĕп задачи, ĕççыннисене физкультура ĕçне явăçтарассипе пĕрлех, вĕсене чупас енĕпе ГТО комплексĕн нормисене партарасси пулса тăрать. Çак задачăна пурнăçа кĕртес тесен кроса лайăх организацилесе ирттермелле.

Хĕллехи вăхăтра ирттернĕ йĕлтĕрлĕ тата гимнастикăллă ăмăртусем çакна кăтартса пачĕç: комсомолпа профсоюзсен хăшпĕр организацийĕсем, çавăн пекех спорт обществисем те, питĕ пысăк кирлĕ ĕçсене ячĕшĕн çеç, шавласа, кампаниллĕ ирттерме пăхрĕç. Çак вăл гимнастикăллă ăмăртусене ирттернĕ чухне уйрăмах лайăх палăрчĕ. Гимнастика тума пĕлмен çынсенех ăмăртăва явăçтарнă. Вĕсем ГТО нормине панă тесе шутлана.

Комсомолпа профсоюз организацийĕсен çавсене шута илмелле. Июнĕн 15-мĕшпе 30-мĕш хушшинче пулса иртекен кросра вăл йăнăшсене текех тумалла мар.

Профсоюзпа комсомолăн кросне ирттерме çирĕплетнĕ положени тăрăх, кроса малтан тренировкăра пулнă çынсем çеç хутшăнма пултараççĕ тата дистанцине пĕтĕмшех чупса тухнисене çеç кросс участникĕ тесе шутлаççĕ. Дистанцисем 500, 1000 тата 3000 метр пуласçĕ тата вĕсем çырмалăк-шырланкăллă вырăнта пулмалла. Çавăнпа та дистанцисене тăкăр çул çине палăртса хуни тĕрĕс мар.

Кросс икĕ эрне хушши пырать. Малтанхи кунсенче пулнă йăнăшсене хăвăрт шалăртса, вĕсене çийĕнчех пĕтермелле. Комсомолпа профсоюз организацийĕсем кросс участникĕсене медицина комиссийĕ витĕр кăларса занятисем, ĕç хыççăн тренировкăсем ирттерессине организацилемелле. Мĕншĕн тесен кӳ ĕçсем пирĕн республикăра кросс пуçланичченех тивĕçлипе пулса пымарĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ халĕ те пулсан, кросс пынă вăхăтрах, çӳлте асăннă ĕçсене организацилемелле пулать.

Малта пыракан организацисем кроса аван хатĕрленнипе кĕтсе илчĕç. Шупашкарти кооптехникум тренировкăсем йĕркеллĕ ирттернĕ, чупас техникăпа паллашнă. Унта кроса 300 çын ытла хутшăнать. «Динамо» колхозра (Куславкка р.) комсомолецсемпе çамрăксем 100 çын ытла кроса хутшăнма хатĕрленсе çитнĕ т. ыт. Паллах, вĕсем кроса ăнăçлăн ирттерме пултараççĕ.

Кросс—профсоюзпа комсомол физкультура енĕпе мĕнле ĕçленине пăхса тухмалли смотр пулса тăрать. Кросс вăхăтĕнче пиншер çын старта тухса хăйсен сывлăхĕпе пултарулăхне кăтартса парĕç. Вăл физкультура движенине халăх хушшинче татах та анлăн сарса пыма май парĕ.

Паян кросс! Пурте старта тухăр!

* * *

Паян, июнĕн 15-мĕшĕнче, çĕршыври хуласемпе ялсенчи пиншер физкультурниксем профсоюзпа комсомолăн массăллă кросĕн стартне тухаççĕ.

Мускавра пирвайхи кун пĕр Сокольникири центральнăй базăра кăна 33 пин çын кроса хутшăнма кăмăл тунă. Столицăра кроса спорт обществисем организациленĕ 45 базăра ирттереççĕ.

Ленинградра тренировка шучĕпе пулнă чупусене 100 пин çынна яхăн тухнă та ĕнтĕ.

(ТАСС).

Малтанхи кун 1000 çынна яхăн хутшăнать

КУСЛАВККА, июнĕн 14-мĕш. (**Телефонпа**). Кроса районĕпе 3 пин çын ытла хутшăнмалла. Ыран, кросăн малтанхи кунĕнче, старта 1000 çынна яхăн тухать. Вĕсем кроса хутшăнма хатĕрленсе çитнĕ. Тренировкăсенче пулнă, медицина комиссийĕ пăхнă.

Кросс районра 7 çĕрте пулса иртет. Кашни участокрах судьясем, врачсем уйăрнă. Дистанцисем те хатĕр. Куславккари вăтам шкулта вĕренекенсем, Кармăшри, Тĕрлемесри тата Картлуйри комсомолецсем кроса лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕç.

ТЕАТР САМОДЕЯТЕЛЬНОÇĔН РЕСПУБЛИКĂРИ СМОТРĔ

Улттăмĕш кун

Июнĕн 13-мĕшĕнче Крупская ячĕпе тăракан садра икĕ коллектив виçĕ комеди лартса пачĕç. Чи малтан Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри драмкружок членĕсем А. П. Чеховăн «Юбилей» ятлă пĕр пайлă комедине вылярĕç.

Комеди лайăх тухрĕ. Кузьма Николайчăн кулăшла образĕ А. Вишневский юлташăн вăйăвинче уçăмлăн курăнчĕ. Вишневскин кашни хусканăвĕ—хăйне ĕçлеме кансĕрлекен этем çине тарăхса йĕрĕнчĕклĕн пăхни, сасартăках тытамак тытнă пек хаярланса кайни—Кузьма Николайчăн «калăпланса çитмен» ăстăнĕ çинчен курахансене ăнланмалла кăтартса парать.

Учительница Пахлова т. ыт. юлташсем те хăйсен ролĕнче аван вылярĕç.

Ун хыççăн Первомайски районри Пăлапуç Пашъелти туллимар вăтам шкулта ĕçлекен учительсем А. И. Чеховăн «Упа» ятлă пĕр актлă комедине лартса пачĕç.

М. Сакмаров (Смирнов ролĕнче) юлташ командине тăплăн типкерсе вĕренни курăнать. Вăл аслă писатель çырнă комедири герой образне тарăннăн ăнланса илнĕ. Сакмаров каласа чух каласăвĕ хусканусемпе пĕлсе çыхăнтарни комедин пахалăхне пушшех те хăпартать. Вăл вырăсларан чăвашла куçарнă пьесăн сăмахĕсене пĕр пăсмасăр, чăваш чĕлхин интонацийĕпе калани комедине лайăх ăнланма пулăшрĕ.

Анчах унăн вăйăвинче çак пĕр ситменлĕх пуррине палăртмалла пулать. Малтанхи картинăсенче артиллерин от ставкăна тухнă поручикĕ Смирнов, хăйĕн сĕнĕвне çынсем ним вырăнне хуманлăн кӳренсе, хытă тарăхать. Çак вырăна ăнăçлăнах пурнăçлаймарĕ Сакмаров юлташ. Каярахри картинăсенче, Смирнова хирĕç пыракан сăлтавсем ӳссе пынă вăхăтра, Сакмаров хăйĕн сассине сасартăках хулленлетерех кăларма пуçларĕ. Унăн движенийĕсем те кирлĕ пек тухаймарĕç вара.

З. Нестерова (Попова ролĕнче) юрату тĕлĕшĕнчен икĕпитлĕ çын образне аванах кăтартма пултарчĕ. Тарçă Лука рольне выляхан Г. Яковлев юлташ та аван вылярĕ. Вăл мĕскĕн старик пекенне, хăравçă чĕреллине аванах ăнланса илме пулать.

Анчах та вылякансем хăшпĕр вырăнсенче сăмахсене пĕтĕмĕшпех пĕлменни (суфлер хыççăн çеç пыни) постановкăн хаклĕ кăштах чакарчĕ.

Çапах та учительсем лартса панă çак комедин пахалăхĕ смотр пуçланнăранпа пулнă чи лайăх постановкăсен ретне кĕрет.

Кайран çак комединех Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри драмкружок членĕсем вырăсла лартса паççĕ. Вĕсем те комедие аван вылярĕç.

Научнăй работниксемпе çыхăну тытаççĕ

Ачасен техникăллă ялхуçалăх станцийĕ тĕрлĕ сăнавсем тăвас тĕлĕшпе нумай ĕçлет. Вăл хăй тавра çамрăк натуралистсене, растениеводсене, геологсене, пчеловодсене, пĕтĕмпе 2000 ачана яхăн, пĕтĕçтерсе тăрать. Паянхи кун станци хăйĕн опытлă участокĕ çине 200 яхăн тĕрлĕ çимĕççем лартнă. Çак кунсенче 200 тĕм виноград лартнă, 11 сортлă фасоль, 4 сортлă кукуруза тата арбузсем акнă.

Çамрăк натуралистсене научнăй работниксем нумай пулăшаççĕ. Техникăллă станци 26 организацине ытла çыхăну тытать, вăл шутра Пĕтĕм Союзри растениеводство тата Чăваш-сен ялхуçалăх институчĕ т. ыт. те. Уйти специалистсем ачасен станцине çырусем, инструкцисем тата вăрлăхсем ярса параççĕ. Воронежри ялхуçалăх институтĕнчи профессор Васильев «Крамбэ абиссинское», Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин директорĕ академик Цицин «Как возделывать долматскую ромашку» темăсем тăрăх инструктивлă çырусем янă. Биологи наукисен кандидачĕ Лопатин (Ленинград), профессор Пельших (Шупашкар) т. ыт. научнăй работниксем те ачасемпе çирĕп çыхăну тытаççĕ.

Çĕмĕрле (**хамăр корр.**).

Хаçатра тухнă материалсем тăрăх

„Çыхăну работникĕсен тимсĕрлĕхĕ“

«Чăваш Коммуни» хаçатăн майăн 20-мĕшĕнче тухнă номерĕнче И. Мосеов Вăрнар районĕнчи çыхăну конторин работникĕсем республикăри хаçатсене Элĕк тата Калинински районсене вăхăтра йăсатманни çинчен çырнăччĕ.

СССР Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, статьяра кăтартнă фактсем тĕрĕс пулнă, Вăрнар районĕнчи çыхăну конторин начальникне Киселев юлташа ятланă тата, малашне те çӳлте асăннă районсене хаçатсене вăхăтра çитермесен, ун пирки администраци енĕпе хытăрах айăпламалла пуласси çинчен асăрхаттарнă.

ПРОГРАММА РАДИОПЕРЕДАЧ

Ст. РВ—74, в 943 м., вр. местное. **20 июня.** 18.00 Радиожурнал для детей. 20.30—Беседа: „Зорко охранять социалистическую собственность". 20.45—Концерт-беседа: „Николо Паганини". **21 июня.** 18.45—Радиосеминар корреспондентов „Последних известий" и массовиков-организаторов коллективного радиослушания.

Все передачи идут на чувашском языке.

Тӳрлетни

«Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх апатне ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен» Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă постановленире («Чăваш Коммуни» июнĕн 14-мĕш) йăнăш вырăнсем пур. Постановленин 1-мĕш пунктĕнчи таблицăра Çĕмĕрлепе Шупашкар хулисăлли шултра апатсем пĕр сурăх пуçне 4 центнер пулмалла (2 центнер мар); 3-мĕш №-лĕ приложенин заголовокне «1942 çулта нумай çул ӳсекен, пĕр çул ӳсекен курăксем, тымар-çимĕçсем тата выльăхсене çитермелли бахча культурисем акмалли план» тесе гӳрлетсе вуламалла (1941 çулта тени ыррăне).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕСПУБЛИКАНСКАЯ ЗАОЧНАЯ
СРЕДНЯЯ ШКОЛА ВЗРОСЛЫХ

Наркомпроса Чувашской АССР об'являет прием желающих обучаться за НСШ и СШ.

Срок приема заявлений устанавливается до 20 августа с. г.

Подающие заявление прилагают к таковому справку об образовании, автобиографию и обязательно марку для ответа.

Правила и условия приема высланы всем сельсоветам, колхозам и предприятиям.

За справками обращайтесь по адресу: гор. Чебоксары, ул. Чернышевского, дом № 6, телефон № 3—67.

Дирекция школы.

В ГОРОДЕ ЧЕБОКСАРАХ НА ЯРМАРОЧНОЙ ПЛОЩАДИ С 23 ПО 30 ИЮНЯ 1941 ГОДА ПРОВОДИТСЯ СЕМИДНЕВНАЯ

БОЛЬШАЯ ЯРМАРКА

На ярмарке будут промышленные и сельскохозяйственные товары в большом ассортименте.

Просьба ко всем артелям, колхозам, колхозникам и торгующим организациям выступить на ярмарке со своими товарами.

2—1 ЯРМАРКОМ.

КАЗАНСКИЙ
ХИМИКО-ТЕХНОЛОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ ИМЕНИ С. М. КИРОВА

об'являет прием заявлений о поступлении в институт на 1 курс

Институт готовит ИНЖЕНЕРОВ-ХИМИКОВ-ТЕХНОЛОГОВ для химической промышленности по 5-ти СПЕЦИАЛЬНОСТЯМ и ИНЖЕНЕРОВ-МЕХАНИКОВ по конструированию, монтажу и эксплоатации оборудования химических заводов.

Срок обучения в институте 5 лет. Выбор специальности производится самим учащимся. Правила приема общие.

Зачисленные в институт обеспечиваются общежитием, постельными принадлежностями и стипендией на общих основаниях.

При институте имеются столовая, буфеты, кино-зал, тир, физкультурный зал, парикмахерская, прачечная и сапожная мастерская.

Все поступающие на 1 курс проходят ПРИЕМНЫЕ ИСПЫТАНИЯ, в период с 1 по 20 августа, по следующим предметам:

а) русскому языку, б) математике, в) физике, г) химии, д) по одному из иностранных языков (немецкому, английскому или французскому), по выбору поступающего.

При поступлении в институт необходимо подать заявление на имя директора института с приложением следующих документов:

1) подробной автобиографии;

2) аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике);

3) паспорта (предъявляется при личной явке);

4) 3-х фотокарточек (миниатюры, без головных уборов), с собственноручной подписью, заверенные госучреждением;

5) справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных).

Заявления направлять по адресу: гор. Казань, ул. Карла Маркса, дом 68, директору Казанского Химико-Технологического института им. С. М. Кирова.

Дополнительные разъяснения высылаются по требованиям почтой и лично в приемной комиссии, ежедневно с 9 час. утра до 8 час. веч. Тел. № 27—55.

ДИРЕКЦИЯ КХТИ.

К СВЕДЕНИЮ

автохозяйств, обозохозяйств, водителей машин и населения Чувашской АССР.

Согласно утвержденных 4 января с. г. Совнаркомом Чувашской АССР „Правил охраны автогужевых дорог Чувашской АССР"—

ЗАПРЕЩАЕТСЯ:

ГУЖЕВОЕ ДВИЖЕНИЕ по черному и белому шоссе во всякое время года;

ДВИЖЕНИЕ ТРАКТОРОВ всех марок по всем мостовым, гравийным дорогам, черному и белому шоссе;

ДВИЖЕНИЕ ВСЕХ ВИДОВ ЭКИПАЖЕЙ по улучшенным грунтовым дорогам государственного и межрайонного значения в период весенней и осенней распутицы и в период сильных дождей до просыхания дорог;

КУПАНИЕ, ПОЛОСКАНИЕ БЕЛЬЯ И ЛОВЛЯ РЫБЫ с мостов, у опор мостов и ледорезов;

ЗАСОРЕНИЕ отверстий мостов и труб, а также дорожных канав, резервов, обочин и какое-либо загрязнение дорог и дорожных сооружений;

ПАСТЬБА СКОТА в пределах полосы отвода;

Фотографирование дорог и сооружений без ведома дорожных органов и без установленных разрешений;

ЕЗДА ПО ОБОЧИНАМ, за исключением разъездов встречных экипажей на однопутных дорогах;

ПЕШЕХОДНОЕ ДВИЖЕНИЕ по проезжей части дорог и мостов;

ЗАПАХИВАНИЕ ПОЛОСЫ ОТВОДА, рубка насаждений, рытье земли и выемка грунта в полосе отвода для каких бы то ни было целей;

СБОР ЯГОД И ПЛОДОВ с посадок, расположенных в полосе отвода;

КУРЕНИЕ НА МОСТАХ деревянных и с деревянным настилом, а также на всех переправах;

РАЗВЕДЕНИЕ ОГНЯ под мостом и ближе 100 метров от мостов деревянных и с деревянным настилом;

ЗАПРАВКА ТОПЛИВОМ, продувка топок, выгребание золы и шлака при переходах через мосты;

РАЗЪЕЗД НА МОСТАХ экипажей с механической тягой;

ПРОГОН СКОТА по дорогам допускается при соблюдении следующих требований: скот перегоняется по дорогам и через мосты небольшими партиями, допускающими легкий надзор за ним; при наличии объездного пути или пригодных для прогона скота объездов, скот перегоняется только по ним; при отсутствии объездных путей скот перегоняется только по проезжей части дорога, причем возможно дальше от обочин и от откосов дорожного полотна.

ПО ЧЕРНОМУ И БЕЛОМУ ШОССЕ ПРОГОН СКОТА НЕ ДОПУСКАЕТСЯ НИ В КОЕМ СЛУЧАЕ, КРОМЕ КАК ПРИ НЕИЗБЕЖНОМ ПЕРЕСЕЧЕНИИ ЭТИХ ДОРОГ, ПО ТРАКТУ ЧЕБОКСАРЫ—КАНАШ ПРОГОН СКОТА РАЗРЕШАЕТСЯ ТОЛЬКО С СОГЛАСИЯ ДОРОЖНОГО УПРАВЛЕНИЯ.

ЗА НАРУШЕНИЕ правил охраны дорог взимается в административном порядке **ШТРАФ** в размере до 100 рублей.

Кроме того, в надлежащих случаях лица, виновные в нарушении правил охраны дорог, привлекаются к уголовной ответственности с возмещением материального ущерба.

Правила охраны автогужевых дорог имеются в каждом дорожном органе.

2—1 Дорожное Управление при СНК Чувашской АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» тата «Хатĕр пул» журналсен — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 4084. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293, Ф. б. 58 84 п. л.